# Тăшман ункине çакланнисем выçса вилесрен… кушак шӳрпи те çинĕ

• 2 стр.

*Анне, аппа та йăмăк, мăшăр… Эсир пуртан кил-çуртăм ăшă*

ХЫПАР

1997 çулхи январĕн 30-мĕшĕнче тухма пуçланă

# Чăваш хĕрарăмĕ

3(873) №, 2015, январь/кăрлач, 31

Хакĕ ирĕклĕ. 16+

Хаçата электрон адреспа та çыру çырма пултаратăр: zuwxeraram@mail.ru.

Аист çерçи мар, тыră сапса илĕртеймĕн. 3 стр.

Раççейри чи лайăх хушма хуçалăх – Етĕрне районĕнчен. 4 стр.

Пĕр чӳречеллĕ, маччаран вĕçĕмсĕр шыв тумлакан çуртра ӳсет тăвată ача… 5 стр.

Путене чĕпписене пӳртрех çитĕнтерме пулать. 8 стр.

Савниçĕм авланнă пулин те унран шăнкăрав кĕтетĕп… 9 стр.

Чап килет те каять… Ун хыççăн мĕн юлать? 11 стр.



Марина ТУМАЛАНОВА сăнӳкерчĕкĕ.

5 стр.

*Арăм упăшкине ватмасть, анчах алăран ямасть.*

Каларăш.

# Пурăн, Настя...

**Çак кунсенче Шупашкарта пурăнакан Настя Перцева 7 çул тултарнă. Ăна парнеленĕ шурă чечек çыххи сĕтел çинче капăррăн курăнса ларать. Анчах тĕнчери пур савăнăçа чун витĕр кăларма пӳрмен хĕрачана. Вăл тăванĕсемпе юнашар кăна хăйне хăтлă туять. Сусăр çуралнăскер кулса кăтартни те – амăшĕшĕн пысăк савăнăç. "Маттурскерĕм эсĕ манăн", – хавхалантарсах тăрать ăна çут тĕнче парнеленĕ хĕрарăм. Ырринех шанать-кĕтет икĕ ача амăшĕ. Асли Юля шкултан вĕренсе тухнă ĕнтĕ, халĕ – студент.**

**Кĕçĕн тĕпренчĕкне Арина Алексеевна халĕ те йăтсах çӳрет. Унпа пĕрле тухтăрсем вĕрентнĕ пек тĕрлĕ хускану тăвать. Хĕрĕ пĕр сăмах та пулин каласан е хăй тĕллĕн утма пуçласан, ахăртнех, унран телейлĕрех çын та пулмĕччĕ çак тĕнчере. Халĕ вара пĕтĕм вăй-хăвата пуçтарса йывăрлăхсене çĕнтерсе пыраççĕ Перцевсем. ДЦПпа, тытамакпа нушаланакан Настя хăйне юратнине, пулăшма тăрăшнине туять, ăнланать.**

## Пачăшкă пулăшăвĕ

"Эпĕ малтан хам та ăнланман, кайран тин ăнкарса илтĕм: çылăхсăр пепкесем çак тĕнчене пирĕштие çаврăнса килеççĕ. Турă вĕсене çынсене тĕрĕслеме ярса парать", – тет Арина Алексеевна. Чăнах, пурнăç илемĕпе киленекенсен чĕри хытса чурăсланман-и? Пĕр-пĕрне мĕнпе пулăшма пултаратпăр-ши эпир? Тем тесен те, çыннăн ырăрах пулмалла. Пĕрлĕхре чир-чĕр те çĕнеймен вăй.

"Пирĕн хуйхă пирки Çĕнĕ Шупашкарти чиркӳре ĕçлекен Илья атте пĕлнĕ те мана чĕнсе илчĕ. Настьăн сывлăхĕшĕн çурта çутас терĕм. Пачăшкăпа калаçниех лăпкăлăх кӳчĕ. Киле таврăнсан интернетра "Настенька, эсĕ чире çĕнме пултарăн" социаллă ушкăн йĕркелерĕм. Çынсемпе хутшăнни те хăват хушать. Хĕрĕме чиркĕве илсе çӳретĕп. Унта ăна та канлĕ", – хушса калать амăшĕ. Урамра чирлĕ ачана çынсем çаврăнсах сăнанине ниепле те хăнăхса çитеймеççĕ Перцевсем.

## Çанталăк



| | кăнтăрла | çĕрле |
|---|---|---|
| 31.01 | -10 | - 4 |
| 01.02 | - 2 | - 1 |
| 02.02 | + 2 | - 2 |
| 03.02 | + 2 | - 3 |
| 04.02 | 0 | - 4 |
| 05.02 | - 2 | - 6 |
| 06.02 | - 4 | -10 |

АСЛĂ ÇĔНТЕРÿ – 70

# Юнпа çыраннă кунсем

## Кушак шÿрпи

– Эпĕ хамăн историе – пĕр çемье икке пайланнине – каласа кăтартăп. Кивĕ Петергофра пурăнаттăмăр. Ленинград облаçĕнчи Петродворец хулине халĕ нумайăшĕ пĕлет. 1941 çула пĕчĕк çак хулара кĕтсе илтĕмĕр те. Пурнăç лайăххĕ. Атте должноçе вырнаçнăччĕ кăна, анне тин çеç пĕчĕк шăллăма çуратнăччĕ. Анчах... вăрçă. Атте тÿрех фронта тухса кайрĕ. Анне виçĕ ачапа тăрса юлчĕ: иккĕмĕш класра вĕренекен тете пурччĕ тата.

Пĕррехинче шкула çÿрекен мĕнпур ачана эвакуацилессине килсе пĕлтерчĕç. Тольăна часрах çула пуçтарма ыйтрĕç. Анчах чукун çул вокзалне çитсен аннене ачасене текех эвакуацилеменнине пĕлтернĕ: ара, малтан илсе кайнă икĕ состава та тĕппипех арканă, пĕр чĕрĕ ача та юлман. Каçхине анне тетепех таврăннăшăн савăнтăм. Вĕсене ыталарăм та йĕрсе ятăм. Пĕр хушăран хĕрарăм каллех килчĕ. Хальхинче пĕчĕк ачаллă çемьесене илсе тухни пирки каларĕ. Анне йĕме тытăнчĕ, кайма килĕшесшĕн пулмарĕ. «Пуçтарăнăр, вăрçă часах вĕçленĕ. Пĕрикĕ уйăхранах каялла таврăнăр. Ытлашши япала та ан илĕр, пĕр сумка çеç тултарăр. Таврăнатăрах», – терĕ хĕрарăм. Сентябрь уйăхĕ. Çапла анне ăшă тум чикмерĕ. Шăллăм уйăх çурăраччĕ ун чухне. Пирĕн кукамай пурччĕ, Ленинградра типографире ĕçлетчĕ. Рабочисен хуларан кайма юрамастчĕ. Кукамай пĕччен епле юлтăрха? Пĕрле канашласа Толя килте юлакане пулать тесе йышăнтăмăр. Кил-çурта та пăхса тăмалла-çке. Кукамая та пулăшĕ. Икĕ тăван алă сулса ăсатрĕ. Тольăн пичĕ тăрăх шултăра-шултăра куççулĕ юхрĕ.

Майĕпен вырăна çитрĕмĕр. Вакунсенчен ансан лавсем çине лартрĕç. Тĕрлĕ ял тăрăх салатрĕç пире. Эпир Беловкăна лекрĕмĕр. Клуба кĕртрĕç. Пукансем çукран урайнех лартăмăр. Колхоз председателĕ ял халăхне пирĕн хушăра суйлама хушрĕ, унсăрăн хăй пырса ярасса каларĕ. Çапла колхозниксем пирĕн çине пăхса çÿрерĕç. Кам ĕçлеме пултарнине сăнарĕç. Пирĕн çине кам пăхтăр, икĕ пĕчĕк ачаллă хĕрарăм кама кирлĕ? Ачи йĕрет, выçă... Эпир çеç юлтăмăр çапла. Арçын пире лав çине лартрĕ те ял варринчи пĕр çурта илсе кайрĕ. «Екатерина, хăнасене йышăн», – терĕ вăл алăка уçса кĕрсен. Лешĕ йышăнасшăн мар. Председатель пирĕн кутамккана урай варрине лартрĕ те тухса утрĕ. Çапла эпир кунтах юлтăмăр. Пĕр хушă пăхса ларнă хыççăн аннене тÿшек пичĕ пачĕ те лупас айĕнчен улăм тултарса кĕме каларĕ. Урайĕнче улăм çинче выртса пурăнтăмăр. Кайран Катя аппа пире хăнăхрĕ. Эпир чĕнменнине, лăпкă пулнине курчĕ те кÿршисенчен сăпка илсе каçрĕ. Ăна маччаран çакса ячĕ. Витя савăнта çывăратчĕ.

Кукамайран пĕрремĕш çыру илтĕмĕр. Ĕçленине, анчах киле çÿреме йывăррине пĕлтернĕччĕ вăл. Тепĕр чухне киле те кайманнине, çавăнпах Толик мĕнле пурăннине пĕлменнине пĕлтернĕччĕ. Иккĕмĕшĕнче вăл типографи текех ĕçлеменнине çырнăччĕ. «Ура ыратнипе çÿрейместĕп. Толя чупать-ха. Тепĕр чухне вилĕ кушак илсе килет. Вара эпир, телейлĕскерсем, шÿрпе пĕçерсе тата эрне пурăнасса пĕлетпĕр».



**Кăрлачăн 27-мĕшĕ – Ленинграда блокадăран тĕппипех хăтарнă кун. Кăçал çак хулана пурнăç «кĕртнĕренпе» 71 çул çитрĕ. Историри чи юнлă осада 872 куна /1941 çулхи сентябрĕн 8-мĕшĕ – 1944 çулхи январь 27-мĕшĕ/ тăсăлать. Блокада вăхăтĕнче хулара 100 пин бомбăпа 150 пин снаряд çурăлать. Хулана тĕппипех çавăрса илнĕ вăхăта 500 пин яхăн çынна çеç эвакуацилесе ĕлкĕреççĕ. Унта тата 2,5 миллион çын юлать. Вĕсенчен 400 пинĕшĕ – ачасем. Блокада вăхăтĕнче 850 пин яхăн çын вилнĕ.**

**Эвакуаципе Чăваш Ене те сахал мар çын килнĕ. 1941 çулхи октябрĕн 1-мĕшĕ тĕлне кăна 3 çултан пуçласа 17 çулченхи 17085 ачана шута илнĕ.**

**Малтанах республика территорийĕнче 5 ача çурчĕ пулнă тăк, вăрçă пуçлансан нумай уçăлнă вĕсем. Тăван çĕршывăн аслă вăрçинче пирĕн республика 70 пин ытла çыншăн тăван кил пулса тăнă. Чылайăшĕ пирĕн республикăрах юлса тĕпленнĕ. Вĕсенчен хăшĕ-пĕринпе ытларикун Наци музейĕнче тĕл пулма май килчĕ.**

Питĕ йывăрччĕ. Хĕлле çитрĕ. Декабрь. Сивĕ. Анне вара туфлипе кăна...

Çĕнĕ çул пирки уйрăммăн калас килет. Чăрăш ÿсмен тăрăхчĕ вăл. Камăн мĕн пуррине пухса хăюсемпе хурăн илемлетнĕччĕ. Пусма татăкĕсенчен бантсем çыхнăччĕ. Ачасем валли шкулта елка тăвасса, парне пуласса пĕлтерчĕç. Вĕренекенсене пĕрер пĕремĕк, вĕренменнисене çуршар тивĕçет иккен. Енчен те юрласан, ташласан пĕчĕккисене те пĕр пĕремĕк шантарнăччĕ. Аннепе сăвă вĕренме тытăнтăмăр. Ун чухне Çĕнĕ çул пирки савăнăçлă сăвăсем те хальхи чухлĕ марччĕ. Унсăр пуçне хаваслине вулас та килместчĕ. Хаçатра тин çеç «Таня» поэма пичетленнĕччĕ. Унăн сыпăкĕ миçе çул иртнĕ пулин те ĕмĕрлĕхех асăмра. Сăмаха тытрĕç. Пĕр пĕремĕк тивĕçнĕшĕн еплерех савăннăччĕ тата!

Атте пире 1944 çулта çеç шыраса тупрĕ. Йывăр аманнăскере госпитальтен тухсан Крымра ĕçлеме хăварнă. Пире чĕнсе ячĕ. Мĕнле çитмеллине пĕлмесĕрех анне çула тухрĕ. Ырă çынсем тупăнаççех терĕ.

Икĕ çăматанччĕ пирĕн, вакунсем икĕ айккинчен те уçăлчĕ. Пĕрне документсемпе таса япаласем, атте патне çитсен тăхăнмаллисем, теприне – хурисене чикнĕччĕ. Пĕр станцире пуйăс тапрансанах вакуна икĕ арçын хăпарчĕ те çăматана вăрларĕç. Пĕр документсăр тăрса юлтăмăр. Юрать-ха атте кĕтсе илчĕ.

Йывăр чирленĕччĕ вăл. Хĕвел çинче питĕ аптратчĕ, çунатчĕ. Çавăнпах ăна тухтăрсем Вăтам Атăл тăрăхне куçма сĕнчĕç. Шупашкарта вара асанне пурăнатчĕ. Çапла 1945 çулта Крымран Шупашкара куçрăмăр та. Пĕчĕк хулаччĕ ун чухне вăл. Çапла Çĕнтерÿпе пĕрле иккĕмĕш пурнăç пуçланчĕ.

Кукамай юлашки çырăвĕнче çапла çырнăччĕ: «Юрать-ха кÿршĕ хĕрарăмĕ килчĕ. Унсăрăн çырăва та яраймастăм. Никам та кĕмест пирĕн пата. Эпĕ утайми пултăм. Толик выртать. Ури шыçрĕ. Вилĕи вăл, чĕрĕ-и – пĕлместĕп». Документсем тума кайсан аттепе аннене паллакан хĕрарăм кукамайпа Толике масар çине илсе кайнине пĕлтернĕ. Пискарев масарĕнче выртаççĕ пулĕ тетпĕр, – каласа кăтартрĕ Галина Персидская.

## Сĕт те çук

– Сарă ту облаçĕнче пурăннă эпир. Атте-анне колхозра ĕçлетчĕ. Кавказ тăрăххелле хăвалама пуçласан аттепе шăллĕ тата пĕр тантăшĕ Ленинград тăрăхне кайрĕç. Анне те пирĕнпе, икĕ ачипе, ун патне çула тухрĕ. Йĕппи ăçта – çиппи çавăнта-çке. Атте Менделеев заводĕнче грузчикре тăрăшатчĕ. Каярах водителе куçрĕ. Выçăллă-тутăллă вăхăтсемччĕ. Юрать аннен паллаканĕ столовăйĕнче ĕçлетчĕ, кăштах апат вăрттăн паратчĕ. Симĕс курăк çинче ларса çинисем халĕ те асăмра.

Кăштахран аттене пÿлĕм пачĕç, анне те ĕçе вырнаçрĕ. Анчах... вăрçă пуçланчĕ. Пĕтĕмпех ас тăватăп, кашни вак-тĕвеке. Ленинграда ватти-вĕттипе пĕрле çуран эпир те утрăмăр. Вăрçăран çеç каясчĕ... Атте пире эвакуацилесшĕнччĕ. Сумка пуçтарма та каланăччĕ. Анчах складра ĕçлекен аттен шăллĕ тытса чарчĕ, малтан кайнисем бомба айне пулнине пĕлтерчĕ.

Хула хĕрринче пурăнакансене пурне те варрине пуçтарчĕç пире. Нева хĕрринчи пĕр хваттерте ырă çынсем пÿлĕм уйăрса пачĕç. Хуçисем çав тери кăмăллăскерсемччĕ. Тăшмансем снарядсем пăрахса пысăк складсене пĕтĕмпех çунтарса ячĕç.

Ачасем валли йывăçран тунă пĕчĕк хула пурччĕ. Вăл та куç умĕнчех кĕлленчĕ. Лару-тăру куллен йывăрланчĕ. Октябрьте çăкăр грампа пама тытăнчĕç. Ноябрьте нормăна чакарчĕç: ĕçлекенсене – 250, ыттисене – 125 грамм. Жмыхпа хутăш пашалу пĕçерсе çитеретчĕ анне. Шыв Невăран ăсаттăмăр. Бидонпа çÿреттĕм. Пĕчĕкскер, валака кĕрсе ÿксрен хăранипе хырăм çине выртса ăсаттăм.

Пĕррехинче çапла шывран таврăннă чухне юханшыв хĕрринче хăма таврашĕн управĕ пуррине асăрхарăм. Буржуйкăсемпе хутса ăшăннă-çке. Киле çитсен шăллăма чĕнтĕм те вăрттăн вырăна илсе кайрăм. Пĕр çÿхе пĕренине шаршанран туртрăмăр-туртрăмăр та – тухрĕ. Пĕр вĕçне Ваньăн хулпуççи çине, теприне хамăнни çине хутăм та утрăмăр. Айккинче сыхласа тăракан салтак пире курчĕ пулин те пĕр сăмах та чĕнмерĕ.

Выçă лараттăмăр. «Ваня, пĕлетĕн-и, кукамайăн халĕ сĕт пур, пирĕн вара – çук», – теттĕм йĕре-йĕре шăллăма. Бомбăсем сирпĕнме тытăнсанах сыхлавсене чупаттăмăр. Тĕлĕнмелле, пĕчĕккисем те шăп кăна ларатчĕç унта.

Февраль-март уйăхĕсенче пурăнма пушшех йывăрланчĕ. Пĕррехинче лавккана çăкăр илме кайсан кĕтме тиврĕ. Черетре тăракансем çăкăр тиенĕ çуна килнине курчĕç те сырса илсех тăпăлтарса çиме тытăнчĕç. Мана темле майпа пысăк татăк лекрĕ. Ыттине пайласа пачĕç. Киле килтĕм те аннене: «Эпĕ паян çăкăр çисе тăрантăм. Кăна эсир çийĕр», – терĕм.

Пĕрре атте курма килчĕ пире. Станоксем турттаракан машина водителĕпе калаçса татăлнине пĕлтерчĕ. Çапла çула пуçтарăнтăмăр. Ладожск тинĕсĕ çийĕн пынă май анне пире брезентпа витрĕ те çывăрма каларĕ. «Çыран курăнать-и?» – темиçе те ыйтрăм эпĕ. «Курăнать», – лăплантарчĕ анне лăпкаса. Тепĕр çырана çитнĕ кун хĕвел пăхатчĕ. Анне пире сухарипе шăккалат илсе пачĕ, анчах нумай çитермерĕ, – куççульне çăта-çăта калаçрĕ Раиса Жаркова. Ырату капланса килнипе асаилÿ вĕçне çитеймерĕ.

## Ăшаланă çĕпре

Блокада нушине курнисем республикăра чылайăн. Вĕсен йышĕнче – Людмила Дороненко та. Унăн хăйĕн историйĕ.

– Вăрçă пуçланнă чухне 10 çултаччĕ эпĕ. Аттене тÿрех фронта илсе кайрĕç. 1942 çулти мартра вилчĕ вăл, унтан выçăпа анне пурнăçран уйрăлчĕ. Пичче – летчикчĕ. Эпир аппапа тăрса юлтăмăр. Вăл кунĕпех ĕçречĕ. Мĕн çутăлсанах каятчĕ те çĕрлесĕр те таврăнмастчĕ. Килте пĕччен ларма хăранипе урама тухса ăçта çынсем пуррине пăхаттăм. Вĕсемпе явăçаттăм. Эпĕ мĕн çинине те аса илейместĕп. Аппа ăшаланă çĕпре илсе килсе паратчĕ. Урăх нимĕн те. Нева хĕрринчех пурăнаттăмăр. Пĕррехинче киле таврăннă май снаряд çурăлнă вырăна лекнĕ эпĕ. Айккине ывăтăнса кайнă май тăн çухатнă. Çурт çумĕнче тупнă мана. Çапла больницăна вырттарчĕç, дистрофик терĕç, кăштах сиплерĕç. Пурнăç Ишлейри ача çуртне илсе килчĕ. Çавăнтанпа Шупашкарта пурăнатăп та.

**Татьяна НАУМОВА.**

## ЫЙТĂМ

**Надежда СМИРНОВА, 38 çулта:**

– Ленинград блокади пирки ача чухне вуланă кĕнекесенчен тата илемлĕ фильмсенчен пĕлетĕп. Шкулта вĕрентнине ытлах астумастăп. Епле чăтнă-ши çав вăхăтри çынсем? Калама çук хăрушă та йывăр пулнă. Халăх выçăпа тата шăнса вилнĕ.

**Владимир КРАСНОВ, 52 çулта:**

– Блокада тесенех куç умне хăрушă ÿкерчĕк тухса тăрать, ун пирки сехечĕ-сехечĕпе те каласа пама хатĕр. Ача чухне вăрçă çинчен кинофильм нумай курнă. Çар училищинче пире историе аван вĕрентнĕ. 900 куна яхăн пынă Ленинград блокади. Тыла пĕтĕмпе те 500 пине яхăн çынна кăна кăларма ĕлкĕрейнĕ. Хулара тата 2,5 миллион çын юлнă, вĕсенчен 400 пинĕшĕ – ачасем. Халăха пĕтĕмпе те кунне 25 грамм çăкăр кăна валеçсе панă. Çулсем йăлтах хупăнни пирки ăна та авиаципе е пăр çийĕн кăна илсе пынă. Пин-пин çын выçăпа вилнĕ.

**Татьяна СТЕПАНОВА, 35 çулта:**

– 900 кун тăсăлнă вăл. Çынсем шывсăр, апатсăр, çăкăрсăр пурăннă. Нумайăшĕ выçса тата шăнса вилнĕ. Кăштах ăшăнас тесе килти сĕтелпукана çунтарнă. Шыв тата çăкăр патне вăрăм черете тăнă. Хаçатра пĕр çемье пурнăçĕ çинчен вуласа пĕлнĕччĕ. Вĕсем кушака пула чĕрĕ юлнă. Чĕрчун шăши тата кайăк тытнă. Хуçисене кăтартмашкăн йăлтах киле илсе кĕртнĕ. Шăшипе кайăка пурте пĕрле çинĕ.

**Андрей ИВАНОВ, шкул ачи:**

– Ку пулăм çинчен нумай вуланă, вăрçă ветеранĕсен аса илĕвĕсене итленĕ. Чăнах та, йывăр пулнă. Ку – пирĕн истори. Асаплă çак вăхăта асран кăларма юрамасть.





САМАХ ПАРĂР-ХА

# Аист çерçи мар, тырă сапса илĕртеймĕн...

Маргарита ИЛЬИНА

**“Анне, мана ăçтан тупнă?” – пурне те пĕлме тăрăшакан шăпăрлан хăçан та пулин çак ыйтăва парасса пĕлсех тăраççĕ-ха аслисем, çапах та вăл яланах ытла та кĕтмен çĕртен янăранипе шартах сикеççĕ. Ним калама аптăраççĕ кун пек чух. Вара аслисен шухăшлавĕ эх! вĕçет ирĕке. Пĕрне купăста йăранĕнче тупнă иккен, теприне – кишĕр хушшинче. /“Анне, атте сана мĕн, пахчипех сĕтĕрсе çӳренĕ-им?”– аса килет Вовочка кулăшĕ/.**

**Апла-и, капла-и, иртнĕ çул аист Чăваш Ене килĕштерни куçкĕрет. Ахальтен мар-тăр... Лару-тăрăва шӳтлемесĕр тишкерер-ха. Ача çуралассине обществăра пулса иртекен тĕрлĕ сăлтав витĕм кӳрет – политикăран пуçласа экономика таранах. Специалистсем палăртнă тăрăх, ку пулăм çăлтăрсемпе те çыхăннă-мĕн. 2008 çулхи çурла уйăхĕн 8-мĕшне аса илер-ха – 08.08.2008... Вĕçĕмсĕрлĕх вăчăри илĕртнипеле çамрăксем ăмăртса туй кĕрлеттерчĕç вĕт çав кун, пĕр пушă кафе-ресторан таврашĕ юлмарĕ. Çав вăхăтрах йĕкĕр çул Мендельсон маршĕ сайра-хутра кăна янăрать. Чи чăтăмсăррисем тата пĕрлешмесĕр май çуккисем /качча тухакан чиперукăн хитре кĕпи хырăм тĕлĕнче мăкăрăлса тăнине хăнăхрăмăр ĕнтĕ/ кăна çул тытаççĕ çакăн пек çулталăкра ЗАГСа. Тата, паллах, ăна-кăна уяманнисем. Унсăр пуçне Тăлăх арăм çулталăкĕ пур тата ытти...**

**Пирĕн çĕршывра юлашки вăхăтра çак енĕпе çанă тавăрса ĕçлени никамшăн та вăрттăнлăх мар: ача çуралнăшăн пĕр хутчен паракан декрет пособийĕсем, уйăхсерен тивĕçекенни, хĕрарăмсен консультацине иртерех кайса шута тăнăшăн хавхалантарни – кун пек чухне тĕрлĕ чир-чĕре маларахах тупса палăртма пулать-çке. /Сăмах май, çак пособисен 2015 çулхи виçисемпе “Чăваш хĕрарăмĕн” çитес номерĕсенче паллаштарăпăр/. Тăрăшни вара нихăçан та харама каймасть. 2013 çулта пирĕн республикăна хайхи аист 17351 хутчен вĕçсе килнĕ, 2014 çулта хăнăхнă маршрутпа çак кайăк 17 264 хут çула тухнă. Мĕн тăвăн çав, унăн хăйĕн кăмăл-туйăмĕ, “çӳлтен” план панипе итлеттереймĕн ăна. Çав вăхăтрах пĕр енĕпе нихăçан та улшăнмасть вара лару-тăру – арçын ачасем çут тĕнчене çулсеренех хĕрачасенчен ытларах килеççĕ. Çакна “партипе правительствăран” та çӳлерехри хăват сăнаса-йĕркелесе тăрать тейĕн... 2013 çулта 8919 арçын ача çуралнă, вĕсемпе пĕрлех 8432 хĕр пĕрчи кун çути курнă, 2014 çулта пĕрремĕшсен йышĕ 8912-пе танлашнă, иккĕмĕшсен – 8352-пе. Шел, çулсем иртнĕçемĕн çак лару-тăру питĕ хăвăрт улшăнать. Сăлтавĕ, паллах, кунта та тĕрлĕрен, анчах та ялĕ-ялĕпе тăлăх арăм тăрса юлнинчен халĕ тĕлĕнме те кирлех мар-тăр. Арçынсене мур çавапах çулать тейĕн. Юлашки вăхăтра масарсем вăй питтисен хĕресĕсемпе тулма пуçлани чуна ыраттарать... Анчах та ку – уйрăм калаçу. Пушшех те, калаçни кăна сахал, чи малтан татса памалли ыйтусен ретĕнчен ку.**

**“Феминизм” ăнлав чăваш хĕрарăмĕшĕн кăтартуллă мар пек туйăнать. Çапах та юлашки çулсенче унăн та чăтăмĕ тулса тăкăнса кайрĕ курăнать: уйрăлас ыйтăва ытларах чух çемье управçи çĕклет. Паллах, ырă пурнăçран мар. Çемьене сыхласа хăварас, ачисене ашшĕпех ӳстерес тесе пĕтĕм вăйне пухать-çке вăл. Çакă амăшĕнчен хĕрне ĕмĕрсен хушши юн шайĕнче куçса пырать. Анчах та кунта та пурнăç хăйĕн еккипе шăвать авă. 2013 çулта 9286 çемье арканнă, пĕлтĕр кăшт сахалрах – 9271. Анчах лăпланса лармаллине пĕлтермест ку. Демографипе çыхăннă лару-тăру пекех, кунта та обществăна пăлхатакан пĕр ыйтусемех витĕм кӳреççĕ.**

**Сăмахăма вĕçличчен цифра тепĕр купипе паллаштарасах килет вулакана. Чăваш çемйи ялан йышлă пулнă. Халĕ, паллах, килĕрен 7-8 ача çуратнине кураймăн. Иртрĕ çав вăхăт, ăна ним тусан та каялла тавăраймăн. Çапах та çемьесенче иккĕмĕш е виççĕмĕш кăна мар, тăваттăмĕш пепкесем те кун çути кураççĕ-ха. Калăпăр, 2013 çулта çуралнă ачасен 3 проценчĕ – шăпах çемьере 4-мĕш пепкесем. Иртнĕ çул вара ача çуратмалли çурта тăваттăмĕшне шыраса çитнисем пĕтĕм йышăн 4 проценчĕпе танлашнă.**

**“Паянхи кун нумай ача çуратса ура çине мĕнле тăратмалла? Агитацилесе ларма çăмăл”, – текенсемпе те тавлашмастăп. Çуратакан хĕрарăмăн хăрах ури тупăкра теççĕ. Чиперех çăмăллансан та пĕр ачапа та хĕрарăм канăçне ĕмĕрлĕхех çухатать. Çапах та пĕр ача пĕрлĕхлĕ тенине те манас марччĕ. Пĕрре çинче иккĕ ытлашши мар. Тĕпренчĕк çут тĕнчере пĕччен тăрса ан юлтăр. Çапах та ашшĕ-амăшĕ унпа тан пурăнаймĕ. Тăван вара, тăварпа касăлсан та, тăванах. Аист Чăваш Ене май пур таран тăтăшрах вĕçсе килтĕр. Анчах та вăл çерçи мар, ăна тырă сапса астараймăн. Турри пулăшсан, хамăр тăрăшсан чăваш çемйинче ача телейлĕ кулли янăраса тăрĕ-ха. Унран пахараххи тата мĕн пултăр çак çутă тĕнчере?**

КУЛĂШ ĂСТИСЕМ

# Шӳтлесе те тупăшĕç



**Кулăша юратакансем январĕн 12-24-мĕшĕсенче Сочире Пĕтĕм тĕнчери «КиВиН - 2015» фестиваль иртнине пĕлеççĕ-тĕр. Унта Чăваш Ен кулăшçисем те хутшăннă. Ытларикун çак хастарсем Республика пуçлăхĕпе Михаил Игнатьевпа, вĕренӳ министрĕпе Владимир Ивановпа, Шупашкар хула пуçлăхĕпе Леонид Черкесовпа çавра сĕтел тавра пуçтарăнса калаçнă. Тĕлпулăва çавăн пекех Шупашкарти «Тĕп хула» КВН союзĕн ытти хастарĕ те хутшăннă.**

Фестивале пуçтарăннă Раççейри тата ют çĕршыври 400 ытла ушкăнран чи пултаруллисем, паллах, КВН 2015 çулхи сезонĕнче вылĕç. Чăваш çамрăкĕсем те пултарулăхĕпе палăрнине асăнмалла. Шупашкарти «Чăвашсем» пĕрлештернĕ команда тĕп лигăсенчен пĕрне – Мускаври «Лампăна» – кĕнĕ. Вĕсене телекуравпа пăхма та май пулĕ.

Январĕн 12-мĕшĕнче Александр Масляков-кĕçĕнни регион лигисен ертӳçисемпе, çав шутра «Тĕп хула» союз ертӳçипе Михаил Елисеевпа тата унăн пулăшуçипе Роман Сергеевпа, тĕл пулнă. Пирĕн ушкăн ĕçне лайăх хак панă. Çавăнпах Шупашкарăн хăйĕн официаллă лиги пулĕ, çавна май тĕп хуламăра кăçал КВН выляма Хусан, Мускав, Набережные Челны, Пятигорск, Саранск, Ижевск хулисенчи кулăшçăсем килĕç.

Çывăх вăхăтрах вара республикăри КВН командисен «КиВиН Чувашии – 2015» фестивалĕ иртмелле. Çак юхăм Чăваш Енре малаллах аталантăр тесен ăна укçа-тенкĕпе çеç мар, кăмăл-туйăм енчен те хавхалантармаллине каланă çамрăксем. Хăйсен енчен мĕн пултарнине пĕтĕмпех тума шантарнă. Кулăшçăсем ЧР Пуçлăхĕн кубокĕшĕн вăйă иртterме те сĕннĕ. Хастар яшсемпе хĕрсем тĕп хуламăрти КВН Çурчĕ пирки ĕмĕтленнине пытарман.

**Татьяна НАУМОВА.**

ЧР ПА сайтĕнчи сăнӳкерчĕк.

ÇĔНĔЛĔХ

# Влаçпа – тӳррĕн

ЧР Патшалăх Канашне 2014 çулта янă Çырăвĕнче ЧР Пуçлăхĕ Михаил Игнатьев Информаци политикин министерстви умне Интернетра халăхпа тӳррĕн çыхăну йĕркелемелли меслет тупма тĕллев лартнăччĕ. Çак хушăва пурнăçласа иртнĕ çулталăк вĕçĕнче «Халăх тĕрĕслевĕ» /«Народный контроль»/ портал ĕçлеме тытăнчĕ. Унăн тĕп тĕллевĕ – çынсене ĕç тăвакан влаç органĕсемпе çăмăллăн çыхăнма май парасси, хумхантаракан ыйтусене тӳррĕн хускатасси.

Портал еплерех ĕçленипе, халăх унпа мĕнле усă курма пултарнипе журналистсене информаци политикипе массăллă коммуникаци министрĕн çумĕ Алексей Новиковпа информаци технологийĕсен пайĕн пуçлăхĕ Ирина Никонорова паллаштарчĕç.

Каларăмăр ĕнтĕ, «Халăх тĕрĕслевĕн» тĕп шăнăрĕ – ахаль çынсемпе влаç хутшăнăвне çывăх йĕркелесси. Çĕнĕлĕхĕн пахалăхĕ – хурава 10 кунран ытла кĕтме тивмĕ. Сăмахран, регистрациленĕ çырăва федерацин 59-мĕш саккунĕпе килĕшӳллĕн 30 кун хушшинче хуравлаççĕ. Тӳрех татса пама çуккисене, тĕслĕхрен, çул юсамалла, вăхăтпа кăшт каярах куçараççĕ. Çĕнĕ портал халăх ыйтăвĕсене 8 енлĕн йышăнать: коммуналлă хуçалăх, çыхăну, социаллă сфера, бизнес, экологи, тирпейлĕхпе инфраструктура, çулсем тата ял хуçалăхĕ. Чăвашла е вырăсла çырни çумне сăнӳкерчĕк те, тĕплĕ адрес та вырнаçтарма пулать. Çырăва сайтпа ĕçлекен ятарлă çын вулать те тĕрĕс вырăна ăсатать.

Портала анонимлă çырусем яма май çук. Унта çырас тесен малтанах Патшалăх пулăшăвĕн пĕрлĕхлĕ порталĕнче /Единый портал госуслуг/ регистрациленмелле. Унта çырăнас текенсене нумай функциллĕ центрсенче тата халăха ĕçпе тивĕçтерекен центрсенче йышăнаççĕ. Хальлĕхе унта 6 пин яхăн çын регистрациленнĕ.

**Татьяна НАУМОВА.**

ПĔЧĔККИСЕМ

# Алăксем яр уçă



Республикăра пĕчĕккисене ача садне вырнаçтарассишĕн, вĕсене хăтлăх кӳрессишĕн çĕнĕ çуртсем çеç хăпартмаççĕ, киввисене те юсаса çĕнетеççĕ, пысăклатаççĕ. Çак ĕç-хĕл РФ Патшалăх Думин «Шкул ӳсĕмĕчченхи вĕрентĕвĕн регионсенчи тытăмне çĕнетесси» тĕллевлĕ мерăсене пурнăçланипе çыхăннине те палăртмалла. Акă январĕн 26-мĕшĕнче Шупашкарта юсав хыççăн 165-мĕш ача сачĕ ĕçлесе кайрĕ. Ăна савăнăçлă лару-тăрура уçнă уява Республика Пуçлăхĕ Михаил Игнатьев, РФ Патшалăх Думин депутачĕ Алена Аршинова, ЧР вĕренӳ министрĕ Владимир Иванов тата ытти хăнасем хутшăнчĕç.

Кăçал хута каяканнисенчен пĕрремĕш-ха вăл. Çĕнетнĕ хыççăн унта 350 ача валли вырăн хатĕрленĕ, малтанах вара 160 ача çӳреме пултарнă. Унччен кунта сывлăх енчен хавшакраххисене йышăннă тăк халĕ ача сачĕ статусне улăштарнă. Шăпăрлансене валли кунта музыка, физкультура залĕсем, методика, логопед, психолог кабинечĕсем ĕçлеççĕ. Тутлă апат пĕçерме те мĕнпур услови йĕркеленĕ.

**Татьяна НИКОЛАЕВА.**

СПОРТ

# Ташă каçĕ... пăр çинче

Раççей Правительствипе РФ Спорт министерстви çĕршывшăн пĕлтерĕшлĕ куна – Сочири Олимп вăййисем пуçланнине – халалласа Раççейре февраль уйăхĕн 7-мĕшĕнче Спортăн хĕллехи тĕсĕсен кунне уявлама йышăннă. Малашне ăна çулсерен паллă тăвĕç.

Паллах, уява Чăваш Ен те хутшăнать. Çак кун йĕлтĕрпе, конькипе ăмăртусем иртĕç. Тĕп мероприятисенчен пĕри – пăр çинчи ташă каçĕ. Вăл «Олимпийский» стадионта иртет. Вырсарникун вара республикăри мĕнпур хулапа районта «Йĕлтĕр йĕрĕ – 2015» старта йыхравлĕ.

**Анна НИКОЛАЕВА.**



ЫРĂ ТĔСЛĔХ

# Раççейри чи лайăх хушма хуçалăх

**Ялта выльăх усракан сахаллансах пырать паян. Ĕне тытакан та, сысна ĕрчетекен те йышлах мар. Пĕрисене выльăх апачĕн хакĕ ÿссех пыни хăратать, теприсем утă-улăм хатĕрлессинчен шикленеççĕ. Виççĕмĕшсене ÿркев пусать ахăртнех. Етĕрне районĕнчи Мăн Пакăшри Ивановсем вара витери йыша пачах та чакарасшăн мар. «Пĕрре хăнăхнă та – нимĕн йывăрри те çук. Хуçалăхри ĕçе техника çăмăллатать. Выльăх нумай тесе килтен тухмасăрах лармастпăр. Тăрăшсан, ÿркенмесен таçта та ĕлкĕрме пулать. Мăйракаллисен шутне чакарма вара шел», – килти хуçалăхпа паллаштараççĕ Ивановсем. Паянхи саманара тенкĕ çумне пус хушма пĕлеççĕ вĕсем. Ахальтен мар çакăн чухлĕ выльăх тытаççĕ-и? Тупăш та, киленÿ те кÿни куçкĕрет. Халĕ вĕсен 10 ĕне, тепĕр иккĕшĕ пĕрремĕш çул пăрулаканнисем, 13 пуç пăру, вăкăрсем, 6 сысна амипе пĕр сысна аçи, качакасем, чăх-чĕп. Вăхăтĕнче çемье 20-шер сысна усрани те пулнă. Ивановсен çемйи Пĕтĕм Раççейри «Ылтăн кĕркунне – 2013» агропромышленноç 15-мĕш куравне хутшăнса «Чи лайăх хушма хуçалăх» номинацире çĕнтернĕ.**



«Ĕнисене алăпа сума та хирĕç мар, нимле йывăрлăх та туймастăп, вăхăта анчах шел. Аппарата хăнăхнă ĕнтĕ, ансат тата хăвăрт пулать. 1 литр сĕте 18-19 тенкĕпе илсе каяççĕ паян», – ăшшăн калаçать кил хуçи арăмĕ.

Эпир Елизавета Ивановнăпа шăкăл-шăкăл калаçса ларнă хушăра кил хуçи те шкултан çитрĕ. Пĕрмаях выльăх шăварнă вăхăта таврăнать-мĕн ĕçрен. Иккĕн ĕç те кал-кал пырать, çавна май витене ялана мăшăрĕпе пĕрле тухаççĕ. Александр Иванович Кивĕ Тинкеш вăтам шкулĕнче ачасене технологи, ОБЖ предмечĕсене вĕрентет, ÿнер ăсталăхне алла илме пулăшать.

### Çынран мĕнпе кая?

«Ал ĕçĕпе эпĕ мĕн ачаран кăсăкланнă. Ÿсерехпе пур ĕçе те тытăнса пăхас килетчĕ. Çын тума пултарайсан эпĕ унран мĕнпе кая-ха теттĕм те алла пăчкă-пуртă, мăлатук тытаттăм», – каласа кăтартать Александр Иванович. Килти, шкулти мĕнпур сĕтел-пукана хăй ăсталанă. Эрешлĕ дивансемпе креслосем, çÿлĕксем, сывăрмалли пÿлĕмри кравачĕсем, тĕрлĕ савăт-сапа тĕлĕнмелле хитре. Пÿртне пахча варрине купаланă, çавна май кил умĕнче хитре сад чĕртнĕ, пушă вăхăтра çемьепе канмашкăн ытармалла мар беседка ăсталанă. Ытти мĕнпур çыннăнни пек шăнкăрч йăвине асилтерекен пÿрт мар вĕсен, ăна урлă лартнă, сылтăмра та, сулахайра та верандăсем. Шалта та хăтлă, аялти хутра – вырăс кăмакиллĕ кухня. Чăн-чăн ăста кăна çакнашкал кермен хăпартма пултарать.

Александр Иванович 30 çула яхăн шкулта тăрăшать. Ĕçри çитĕнÿсемшĕн ăна темиçе хутчен те дипломсемпе, хисеп хучĕсемпе хавхалантарнă. Республика, район шайĕнчи конкурссенче пĕрре мар çĕнтернĕ вăл. Çĕнĕ Шупашкарта ĕçленĕ чухне вĕренекенсемпе пĕрле йывăçран вазăсем те ăсталаса сутнă, çапла майпа шкул валли чылай тупăш тунă. Ĕç вырăнне улăштарма юратманран унăн пĕр хăнăхнă çĕртен ниçта та каясси килмен. «Юл яла, ватлăхра пире кам пăхать?» – амăшĕ чĕнсен çапах та çуралнă кĕтесе таврăннă. Уншăн ÿкĕнмест вăл. Хулара пурăнас пулсан вăхăта мĕнле ирттермеллине те пĕлмест халĕ.

«Шкулта станокне те хамах ăсталанăччĕ. Чулхулана кайса йывăça каскалама, ÿкерсе илемлетме вĕренни те пурнăçра чылай пулăшрĕ. Тĕрĕссипе, çын тума пĕлмен ĕç пулма пултараймасть, калаллалла мар çеç. Атте те ылтăн алăллăччĕ, пур ĕçе те типтерлĕ, çынна килĕшмелле ăсталама тăрăшатчĕ», – каласа кăтартать Александр Иванов.

### Ир-ирех ура çинче

«Ытла ир тăмастпăр эпир, выльăх патне кашни кун 4 сехетре тухатпăр. Сĕт пуçтарма киличчен выльăхчĕрлĕхе апатлантарма та, витене тасатма та ĕлкĕретпĕр. Каçхине 3 сехетсенче ĕçе пуçăнатпăр», – теççĕ Ивановсем.

Хĕл хырăмĕ аслă. Картиш тулли выльăх валли апачĕ те нумай кирлĕ. Çуллахи вăхăтра капанĕ-капанĕпе утă хатĕрлеççĕ, ăна йăлтах анкартине купалаççĕ. Техника енчен чăрмав çук вĕсен, çавăнпа та ĕçĕ кал-кал пулса пырать. Ывăлĕпе хĕрĕ те ашшĕ-амăшне чылай пулăшаççĕ. Вĕсем иккĕшĕ те И.Н.Ульянов ячĕллĕ Чăваш патшалăх университетĕнче вĕренеççĕ, пĕри тухтăр, тепри строитель пуласшăн.

Ветеринара вĕренмен пулин те выльăх чирĕсем çинчен йăлтах пĕлеççĕ Ивановсем. Ĕне чирлесен те аптрамаççĕ, уколне те хăйсемех тăваççĕ, сиенчĕх эмелне те ĕçтереççĕ. Выльăх-чĕрлĕхе сыхăннă мĕнпур вăрттăнлăха пĕлсе тăраççĕ. Пăрулана чухне пулăшу параканĕсем те хăйсемех.

Пушă вăхăтра кăçатă та йăвалаççĕ Ивановсем. Ку ĕç те киленÿ кÿрет вĕсене. Елизавета Ивановна çăм арлама, çыхма ăста. Çав вăхăтрах Шупашкара театра, кинона кайма та вăхăт тупаççĕ. Пысăк хуçалăха пăрахса хăварса пĕр çулхине çемьепе пĕрле Хура тинĕс хĕррине те кайса килме пултарнă. Çу вăхăтĕнче епле вăхăт тупнинчен, çавăн чухлĕ выльăха пăрахса тухса кайнинчен вара паянхи кун хăйсем те тĕлĕнеççĕ.

Лайăх пурăнма пур условисем те пур Ивановсен. Пĕрпĕрне çур сăмахран ăнланса, килĕштерсе пурăнаççĕ Александр Ивановичпа Елизавета Ивановна. Пÿртре таса та хăтлă. Выльăх пăхасси те юратнă ĕç кăна вĕсемшĕн. Районта иртнĕ «Çулталăкри чи лайăх та ĕçчен çемье» ята ахальтен тивĕçмен Ивановсем.

**Елена АТАМАНОВА.**
Автор сăнÿкерчĕкĕ.



# Автан сассине юратнăран...

Çĕр ĕçĕшĕн тунсăхласа хуларан яла куçакан сахал. Вĕсенчен пĕри – Канаш районĕнчи Усырмари Тамара Антонова. Хĕлĕпех теплицăра симĕс сухан çитĕнтерет вăл. Тул çутăличчен ĕçе пуçăнать те çынсем сывăрма выртсан тин пÿрте кĕрет. Ăна ачисем пулăшаççĕ. Ырми-канми ĕçлесе пуçтарнă укçапа вĕсем хăтлă йăва çавăрнă. Стройматериал туянма патшалăхран кивçен те илмен.

Пĕлтĕр Тамара Сергеевнăпа унăн хĕрĕ Людмила 1985 çултанпа пушă выртнă çĕр лаптăкне тара илнĕ. Унта пахчаçимĕç лартса ÿстернĕ. Ĕç хатĕрĕсене упрама кĕлет çĕклесе лартнă. Унсăр пуçне çакăнта электричество çитерме палăртса хунă. Капла ÿсен-тăран шăварма меллĕ пулĕ. Пичкере хăярпа купăста тăварлама та ÿркенмен ялта тĕпленнисем.

Калча çитĕнтересси те – вĕсемшĕн чун киленĕçĕ. Ку килте хăяр та хĕвел хĕртме пуçличченех пулса çитет.

«Эпĕ автан авăтнине юрататăп. Çавăнпа та ялта лайăх», – тет Тамара Антонова. Манпа калаçса сывлăш çавăрса илнĕ хыççăнах сухан ещĕкĕсем патнелле васкарĕ вăл.

**Марина ГРИГОРЬЕВА.**
Автор сăнÿкерчĕкĕ.

ÇĔР ЫЙТĂВĔ

# Ют çĕршывсене çитмест, чăвашшăн ытлашши-ши?

Иртнĕ вунăçуллăхра сутнă е арендăна панă çĕрсен калăпăшĕ тĕнчипе 200 млн. гектара çитнĕ /Land Matrix специалисчĕсем шутласа кăларнă тăрăх/. Ĕçмелли шыв тата апат-çимĕç дефицичĕ ÿссе пынăран нумай çĕршыв чухăнрах кÿршисенчен пулăхлă çĕрсене илме тăрăшать. Сăмахран, Индонезирен Итали пĕр инвесторĕ – фермер – усламне аталантармашкăн, Инди ял хуçалăхĕ валли 2-шер млн гектар çĕр туяннă.

Таçта инçетре çĕр çитменнипе нушаланаççĕ. "Пирĕн патра вара?" – шухăшласа илчĕ пулĕ хăшĕ-пĕри. Чăнах та, вăхăтĕнче патшалăх ял çыннине чăн хуçа пулнине туйса илмешкĕн çĕр пайĕсем уйăрса пачĕ. Анчах... таçта çĕршĕн кĕсйисене самай çÿхетме хатĕр тĕк чăваша вара кунашкал мул кирлĕ те мар тейĕн.

Çак шухăшсем сăлтавсăр çуралмаççĕ. Раççей ял хуçалăх надзорĕн республикăри управленийĕн инспекторĕсем тĕрĕслевсенче çĕр саккунĕсене пăсни тĕлĕшпе "вирлĕ калаçу" пуçланă хыççăн хирĕçуллĕ çак лару-тăруран тухмалли темиçе мел вăй илсе пырать. Яваплăха сирес тесе лаптăкран "хăтăлаççĕ": е арендăна параççĕ, е ял тăрăхĕн администрацине ыйту çыраççĕ.

Çук, тÿрех вăрçма ан васкăр – тĕллевлĕн усă курма тытăнакансен йышĕ те пĕчĕк мар. Патшалăхăн аслă инспекторĕ Раиса Петрова каласа панă тăрăх, 2014 çулхи представленисене пурнăçланă май 4558 гектара пусă çаврăнăшне кĕртнĕ; 72,67 гектар тĕлĕшпе хуçисем пулма пăрахма шут тытни пирки ыйтусем çырнă /кунашкал тĕслĕхсем Улатăр, Куславкка, Шупашкар, Сĕнтĕрвăрри районĕсенче тата Шупашкар хулисенче пулнă/. Чăнах та, лаптăкне арендăна паракан сахал мар. Çакнашкал пулăмсем пĕлтĕр кăна мар, ытти çулсенче те час-часах тĕл пулкалатчĕç. Иртнĕ çул Шупашкар, Сĕнтĕрвăрри, Йĕпреç районĕсен çыннисем хăйсен çĕрĕсене арендаторсене усă курма панă.

Палăртмалла, çĕр тĕлĕшпе йĕркене пăснăшăн ытларах чухне РФ КоАПĕн 8.7 статйин 2 пайĕпе протокол çырма тивнĕ. Кунта шăпах çумкурăкĕ ÿссе кайнă лаптăксем пирки сăмах пырать. Çавăн пекех пулăхлăха ÿстерес тесе кирлĕ ĕçсем туса ирттерменшĕн те, лаптăк çинче çÿп-çап купи пулсан та, агрохими тĕпчевĕсене ирттермесен те асăннă статьяпах явап тыттараççĕ. 2014 çулта пĕтĕмпе 199 протокол çырма тивнĕ.

Тĕнчери юлашки пулăмсене кура куçман çак пурлăха упраса хăварма калас килет. Пĕрремĕшĕнчен, çĕр çинче тар тăкакан выçă юлмасть. Иккĕмĕшĕнчен, ваттисем: "Çĕр хăйне хисеплекене вăй-хал парса тăрать," – тенĕ-çке. Çакна манас марччĕ. Çапах та чăваш вăй-халĕ çĕрпе çыхăннă.

**Надежда ВАСИЛЬЕВА, управлени ĕçченĕ.**



АМĂШĔН ХĂВАЧĔ

# Пурăн, Настя...



● АМĂШĔ ХĔРНЕ УРА ÇИНЕ ТĂРАТМА ĔМĔТЛЕНЕТ.

/Вĕçĕ. Пуçламăшĕ 1-мĕш стр./.

## Пĕр вĕçĕм сипленмелле

Арина Алексеевна иккĕмĕш пепкине хăй тĕллĕн çуратайман. 7-8 сехет мĕкĕрленнĕ хыççăн касса кăларнă тĕпренчĕкĕ сусăрланнă-мĕн. "Уйăхран тин больницăран тухсан кăкăр ĕмме те вĕрентнĕччĕ ăна. Анчах хĕрĕм халсăрлансах пычĕ", – аса илет хĕрарăм. Ун чухне мĕн чăтса ирттернине пĕр хăй кăна пĕлет вăл. Чун ыратăвне сăмахпа çырса кăтартайăн-и?

Шупашкарта кăна сипленипе çырлахман Перцевсем, Раççейри, чикĕ леш енчи клиникăсемпе çыхăну шыранă. Хусанта, Новосибирскра, Германире, Чехире пулнă. "Хĕрĕме пĕрмай вырттарса пурăнтарас килмест. Ăна пулăшмалла. Анчах упăшка ĕçлесе илнĕ укça çулталăкне темиçе хут реабилитаци курсĕ витĕр тухма çитмест", – чунне уçать хĕрарăм. Çук, темле пулсан та алли усăнман унăн.

## Ырăлăх

2012 çулта, Германие кайма укçа çитменнине кура, Перцевсем сенкер экран урлă халăхран пулăшу ыйтнă. "Упăшка килĕшесшĕнех пулмарĕ. "Хамах кирлĕ чухлĕ нухрат ĕçлесе илĕп", – терĕ. Аранах ÿкĕте кĕртрĕм. Пирĕн нимĕншĕн те аванмарланмалла мар", – тăсăлать калаçу. Çакăн хыççăн пĕлĕшсем кăна мар, пач пĕлмен çынсем те укçа куçарса пама пуçланă вĕсене.

## Çĕнĕ курав

Арина Перцева – Тăвай районĕнчи Çĕнĕ Пуянкасси хĕрĕ. Ăна ашшĕ, вăл та художник, пĕчĕкренех тавралăх илемне хут çине куçарма вĕрентнĕ. Хăйĕн пурнăçне чун киленĕçĕпех çыхăнтарма шухăшланă вăл. Аслă пĕлÿ илсен Дмитроври фарфор заводĕнче, Шупашкарти керамика цехĕнче ĕçленĕ.

Пултарулăх çынни килте те пушă вăхăт тупăнсанах ÿкерме ларнă. "Ĕçÿсен куравне йĕркелемелле санăн" – сĕннĕ юлташĕсем. "Мана чап кирлĕ мар", – кăсксен хуравланă Арина Перцева. "Халĕ, туятăп, вăхăт çитрĕ", – палăртать пурнăç терт-нушине астивнĕскер. Картина сутнă укça та хĕрне сиплемешкĕн çав тери кирлĕ. Сăмах май, вăл хальхи тата хĕр чухнехи хушаматăн пĕрер сыпăкне пĕрлештерсе Перцаль хушма ят йышăннă.

"Пачах ÿкермесен кун пушă иртнĕн туйăнать", – пытармасть художник. Унăн картинисене Шупашкар, Мускав, Питĕр, Казахстан, Австри... çыннисем туяннă. Нумаях пулмасть К.В.Иванов ячĕллĕ Литература музейĕнче Арина Перцальăн ĕçĕсен куравĕ уçăлчĕ. Вĕсенче чечексем, хула пейзажĕ сăнланнă.

## Германири чечексем

Пĕрре Германири клиникăна кайнă чухне çул хĕрринчи мăкăнь тата утмăлтурат хитрелĕхĕпе киленсе пынă вĕсем. Вырăна çитсе вырнаçсан Арина Перцаль ÿкерме пуçланă. Çав чечексен хитрелĕхне, тĕс вылявне хут çинче упраса хăварас килнĕ унăн.

Палатăна кĕнĕ медсестра картинăна курсан нимĕçле 2-3 сăмах каланă та тухса кайнă. Нумаях та вăхăт иртмен, сывлăх сыхлавçи нимĕçле тата вырăсла лайăх пĕлекен хĕрарăмпа пĕрле пырса кĕнĕ. Вăл ăна туянасшăн иккен.

Арина Перцальăн картинисем клиникăн тĕп тухтăрне те килĕшнĕ. "Атьăр, çакăнтах курав йĕркелĕпĕр", – хĕрарăма хавхалантарнă вăл. Курма пынисем унăн пултарулăхне пысăк хак панă. Арина Алексеевна хăйĕн ĕçĕсене сутса та, парнелесе те хăварнă.

Тепрехинче Германире художник хăйĕн картинине коридортах хăварнă. Ун тавра халăх пуçтарăнса тăнă. Чечексем каллех пурне те тыткăнланă. "Турăçăм, мĕнешкел илемлĕ. Эсĕ тата мĕн ÿкеретĕн?" – пĕлесшĕн пулнă хайхисем. Вăл чечексем кăна мар, портрет ÿкерме те саккас йышăннă.

Çакăнти сывлăх сыхлавçисем Настьăна шкул рюкзакĕ парнеленĕ. Арина Перцаль та асăнмалăх ялала хăварма шухăш тытнă. Ырă кăмăллă нимĕçсем валли татах картинăсем хатĕрленĕ вăл.

Германири, Чехири, Сочири илемлĕ вырăнсем унăн ĕçĕсенче сăнланнă. Акă çĕр çырли пуçтарма кайсан татса килнĕ чечек çыххи куçа туртать. Лилисем хваттере хăтлăх кĕртеççĕ. Уй чечекĕсем мĕн чухлĕ тата! Хальтерех мастерскойри орхидейăна ÿкерсе пĕтернĕ вăл. Çав вăхăтрах художник ялшăн тунсăхлани те палăрать.

Перцевсем Интернет урлă нумай юлташ тупнă. "Ачасем-пирĕштисем" социаллă тытăмрисемпе хутшăнаççĕ. "Ал ăстисен ярмăркки" ушкăнрисем Настьăна çемçе теттесем ярса параççĕ. Патша хĕрне çаврăнма хатĕрленекен шапа та, упа çурисем те хĕрачан кăмăлне кайнă.

## Айккинче ан юлăр

Пирĕн йышра ырă çын сахал мар. Перцевсене волонтерсем те укçа пуçтарма пулăшаççĕ.

Кĕçех амăшĕпе хĕрĕ Германи клиникине çул тытĕç. Арина Алексеевна кашни саманта сăнÿкерчĕксенче сăнласа хăварасшăн. Пĕринче Настя тухтăрсем пулăшнипе шыва кĕрет, тепринче кроликсене кусран вĕçертесшĕн мар, виççĕмĕшĕнче – йытăпа пĕр чĕлхе тупнă.

Пурăн, Настя! Пирĕнтен кашниех çак хĕрачан пурнăçне ырă енне улăштармашкăн пулăшма пултарать.

Арина Перцевăна Раççей Перекет банкĕ урлă укça куçарса пама май пур. Унăн реквизичĕсене хаçатра пичетлетпĕр:

Чувашское ОСБ № 8613 г. Чебоксары

ИНН: 770783893 БИК: 049706609

КПП: 213002001

Л/С 42307810375023400497

Получатель: Перцева Арина Алексеевна

Карта Сбербанка 5469750010424227

Владелец Перцева Арина.

Яндекс кошелек: 410011177568153



● ÿКЕРЧĔКРИ ЧЕЧЕКСЕНЕ, ЫТЛА ТА ЧĔРĔ КУРĂННĂРАН, АЛĂПА СĔРТĔНЕС КИЛЕТ...

**Марина ТУМАЛАНОВА.**
Автор сăнÿкерчĕкĕсем.

РЕДАКЦИ ПОЧТИНЧЕН

# Аппăшĕ çăвăннине шăллĕн пăхса лармалла-и?

Çырма мĕн хистерĕ-ха? Чун ыратни. Хаçат-журнала темĕнле йывăр шăпаллă çын та çырать те...

Мĕнрен пуçлам-ши? Шупашкарти ача çуратмалли çуртра Муркаш районĕнчи çамрăк хĕрарăмпа пĕр палатăна çаклантăмăр. Эрнере тем пирки те калаçрăмăр. Манăн ача йывăр çуралнăран пурăнаймарĕ. Пĕрле выртакан хĕрарăм пепкине пăхса лăпланма тăрăшаттăм.

Унтанпа нумай çул иртрĕ. Пĕрле ача çуратнă хĕрарăм патне хăнана кайса курас килчĕ. Çăвăнпах çула тухрăм та. Муркаша çитме вăхăт нумай кирлĕ мар. "Кирпĕч завочĕ" чарăнура ансан та икĕ хутлă хĕрлĕ кирпĕч çурта шыраса тупма йывăр пулмарĕ. Анчах çурта кĕрсенех сăмсана таса мар шăршă çапрĕ. "Мĕнле пурăнаççĕ-ши?" – тесе иккĕмĕш хута хăпартăм. Алăка уçса кĕрсенех тĕлĕнтĕм: пĕчĕк пÿлĕмре пилĕк çын кун кунлать. Çакăнтах пĕçермелле, çăвăнмалла. Нимĕнле условисем те çук. Юрать шыв кĕрсе тухать. Урайĕнче çулталăкри ача чупать. Пÿлĕмĕн пĕртен-пĕр чÿречи урамалла тухать. Маччаран шыв юхнăран ун умне те ача шыва кĕртмелли ванна лартнă. Пÿлĕм кĕтессисем кăвакарнă. Ачисене канма та вырăн çук. Çывăрма пĕр вырăнпа пĕр диван лартнă: хĕрарăм кĕçĕннипе – кравать çине, виçĕ ачи диван çине выртаççĕ. "Ялта кайса пурăнма май çук-им?" – явăнчĕ пуçра шухăш...

Çамрăклах, 14 çулта, ашшĕ-амăшĕсĕр юлнă хĕрарăм. Пиччĕшĕпе иккĕшне кукамăшĕ пăхса ÿстернĕ. Çирĕме çитсен пĕр çамрăкпа явăçса ача çуратнă. Çавăн чухне пÿлĕм панă та ăна. Кăштахран иккĕмĕшĕ çуралать. Пурăна киле арçын ерех ĕçме пуçлать. Çавăнпах пĕр вăхăтран хĕрарăм тепĕр арçынпа паллашать: виççĕмĕш пепке кун çути курать. Ку та ерех ĕçме тытăнать. Виçĕ ачине мухмăр шăршине сывлаттарас килменрен ăна та кăларса ярать амăшĕ. Пĕччен йывăр пулнăран тепĕр арçынпа, çамрăк чухнехи тусĕпе, çывăхланать. Тăваттăмĕш ача та çуратать. Пĕчĕк пÿлĕмре ахаль те тăвăр пулнăран арçын килсе çеç çÿрет. Пĕри районта, тепри ялта пурăнсан уйрăлса каясси те çавăнтах-çке, çавăнпах пĕрлех пурăнтарас килет вĕсене манăн.

Эпир калаçса ларнă хушăра ачисем шкултан пĕрин хыççăн тепри таврăнма пуçларĕç. Хĕрĕ вуннăмĕш класра вĕренет, икĕ ывăлĕ – çиччĕмĕш тата пĕрремĕшĕнче. Асли ют çын пуррине пăхмасăрах çи-пуçне улăштарчĕ, вăтанмарĕ. Тепĕр тесен урăхла майĕ те çук. Çикелерĕ те бокс секцине тухса кайрĕ. Ывăлĕсем урок тума ларчĕç. Тĕрĕссипе, вĕренме майĕ те çук: ахаль те тăвăр пÿлĕме шыв тумланăран савăтсем лартса тултарнă, шăллĕ те кĕнеке-тетраде пырса туртать, чăрмантарать, сĕтел хушшине те иккĕн вырнаçма пулмасть.

Çаксене пĕтĕмпех сăнанă май чун ыратрĕ. Нумай ачаллă çемьесене пулăшмалла теççĕ. Çырăва Муркаш район пуçлăхĕсем çеç мар, республика ертÿлĕхĕ те курасса шанас килет.

Ачасем пирĕн пуласлăх тетпĕр. Пĕчĕк пÿлĕмре 16 çулти аппăшĕ çăвăннине арçын ачасен пăхса лармалла-и? Çакăн пек нуша куракансем татах та пулĕ. Пулăшасчĕ.

Ятăма кăтартманнин сăлтавĕсене ăнланатăр пулĕ тетĕп.

**РЕДАКЦИРЕН.** *Ятсăр çырусемпе пичетре усă курма тахçанах пăрахнă эпир. Анчах хальхинче автор ытла та чуна хумхантаракан ыйтăва хускатнă. Çапах та çырăва кун çути кăтартиччен вырăнти влаçпа çыхăнтăмăр. "Çапла, пур ун пек çемье", – пĕлтерчĕç Муркаш тăрăхĕнчен. Çапла, ыйту пур, анчах чиновниксем, яланхи пекех, ăна татса пама васкамаççĕ курăнать.*

*Автора вара çапла сĕнес килет. Ан шикленĕр ятăра кăтартма. Пичет саккунĕпе килĕшÿллĕн, эпир ăна хаçатра кăтартмасса та пултаратпăр – хăвăр ыйтсан. Тепĕр чухне анонимлă çыру карçинкка тĕпĕнче вырăн тупма пултарать. Кун пек чухне тивĕçлĕ çын патнех пулăшу çитеймĕ.*



## ЫРКĂМĂЛЛĂХ КĔТЕСĔ



*Хисеплĕ вулакансем! Асăрхарăр-и? Хаçатра "Ыркăмăллăх кĕтесĕ" уçма шухăшларăмăр. Ахăртнех, килте нумайăшĕн кивĕ е усă курман ытлашши хатĕр-хĕтĕр /сĕтел-пукан, ача-пăча çи-пуçĕ.../ пур, вĕсене пирĕн хаçат урлă вырнаçтарма май килĕ. Çынна ырă тума, пулăшма васкакансенчен пĕлтерӳсем кĕтетпĕр. Телефон номерне тата хăвăр ăçта пураннине кăтартма ан манăр.*

- **Шупашкарта пурăнатăп. Сутă симĕс тĕслĕ комбинезон сĕнетĕп: 5 уйăхран пуçласа 1,6-ченхи хĕрача валли.**
- **44 виçеллĕ сăрă тĕслĕ куртка. Хĕрарăм валли. Тел. 8-961-348-19-01.**

*Асăрхăр! Çак япаласене ахалех, укçасăрах, паратпăр.*

*Пĕлтерӳсене те – эсир çав япаласене ахалех пама хирĕç мар пулсан – хаçата тӳлевсĕрех вырнаçтаратпăр. Ыйтусем пулсан редакци телефон номерĕсемпе шăнкăравласа пĕлмелле.*

## АПАЧĔ ТУТЛĂ ПУЛТĂР

### Томат соусĕнчи мойва



**1 килограмм мойва, 2 апат кашăкĕ томат пасти, 1 стакан томат сĕткенĕ, пуçлă 1 сухан, 1 кишĕр, укроп, тăварпа пăрăç кирлĕ.**

Пулă ăшчиккине кăлармалла, пуçне касса илмелле. Сухана çаврашкан турамалла. Кишĕре теркăламалла. Укропа вĕтетмелле.

Мойвăна, сухана, кишĕре, укропа мультиваркăна сийлесе хумалла. Тăварпа пăрăç сапмалла. Çиелтен томат пастипе сĕткенне ямалла. 2 сехет пăшăхламалла.

### Рис торчĕ

**Чуста çăрма 200 грамм хăйма, 1 стакан сахăр, 2 çăмарта, 1/4 чей кашăкĕ тăвар, 1/4 чей кашăкĕ апат соди, 1 апат кашăкĕ услам çу, 12 апат кашăкĕ çăнăх кирлĕ.**

**Ăшне хума 1 стакан рис, 2,5 стакан сĕт, тăвар, лимон хуппи, 30 грамм услам çу, 150 грамм сахăр, ванилин, 100 грамм исĕм, 170 грамм шăккалат хатĕрлемелле.**

Кăпăклантарнă хăймана сахăрпа, çăмартапа, тăварпа, апат содипе, услам çупа, çăнăхпа пăтратмалла. Чустана икĕ пая уйăрмалла. Çаврашкан йĕтĕрлесе духовкăра пĕçермелле.

Риса сĕтпе пĕçермелле, тăварпа лимон хуппи хушмалла. Риса дуршлага ярса сивĕ шывпа çумалла, лимон хуппине кăларса илмелле. Услам çăва сахăрпа, ванилинпа пăтратса кăпăклантармалла, 2 çăмарта сарри, шӳтернĕ исĕм ямалла. Ăна риспа пăтратмалла. Çак хутăша икĕ пашалу хушшине сĕрмелле. Унпах торта çиелтен витмелле. Йăлтах ирĕлтернĕ шăккалатпа хупламалла.

### Мăйăрпа чăх пĕверĕ

**700 грамм чăх пĕверĕ, 1 банка çу çырли, 7-8 шăл ыхра, 100 грамм астăрхан мăйăрĕ, тăвар, пăрăç, укроп кирлĕ.**

Вĕтетнĕ ыхрана тип çупа ăшаламалла, чăх пĕверĕ ямалла. Пиçсен туранă мăйăр, çу çырли, укроп хушмалла. Тăварпа пăрăç сапмалла. Чăх пĕверĕпе мăйăра 5-7 минут пăшăхламалла.

### "Юр чăмакки"

**250 грамм краб "патакĕ", пĕçернĕ 5 çăмарта, 2/3 банка куккурус, пĕçернĕ 1 стакан рис, 200 грамм сыр, майонез, укроп кирлĕ.**

Риса, куккуруса, çăмартана, краб патакне аш арманĕ витĕр кăлармалла. Çимĕçсене майонезпа пăтратмалла, вĕтетнĕ укроп хушмалла. Çак хутăшран çаврашкасем тумалла. Çиелтен теркăланă сыр сапмалла.

### Кавăн пăтти

**100 миллилитр тип çу, 100 миллилитр шыв, 3 çĕрулми, 150 грамм рис, 3 кишĕр, пуçлă 3 сухан, 1 кавăн, 1/2 чей кашăкĕ тăвар кирлĕ.**

Хуппинчен тасатнă çĕрулмипе кавăна тăваткалласа турамалла. Сухана вĕтетмелле. Кишĕре теркăламалла. Риса çумалла.

Кастрюле шывпа тип çу ямалла. Çĕрулмине, риса, кишĕре, сухана, кавăна сийлесе хумалла. Тăвар сапмалла. Кавăн пăттине вăйсăр çулăм çинче пĕçермелле.

### Сырник

**600 грамм тăпăрчă, 4 çăмарта сарри, 100 грамм çăнăх, 50 грамм исĕм, 100-140 грамм хура слива, лимон хуппи, ванилин, тип çу кирлĕ.**

**Соус валли шăнтнă 200 грамм çырла, 2 апат кашăкĕ сахăр, 4 апат кашăкĕ хăйма, 2 апат кашăкĕ улма-çырла сиропĕ хатĕрлемелле.**

Пăтратса кăпăклантарнă çăмарта саррине тăпăрчăпа, вĕтетнĕ хура сливăпа, шӳтернĕ исĕмпе, çăнăхпа, сахăрпа, ванилинпа хутăштармалла. Çак хутăшран сырник тумалла. Тип çупа ăшаламалла.

Çырлана сахăрпа, хăймапа, улма-çырла сиропĕпе пăтратмалла. Сырнике соуспа пĕрле çимелле.

## ВУЛАКАН СĔНЕТ

# Сыпăсем ыратсан

Шăмă сыпписем ыратнине желатин иртерет иккен. Кун пирки тахçанах илтнĕччĕ. Сурнине ирттерет çеç мар, шăмă сиксен е хуçăлсан та сурана хăвăртрах пирчеме пулăшать. Сыпăсен хушшинчи шĕвеке йĕркелеме пулăшать вăл. Витĕмĕ çеç тӳрех палăрмасть. Мăшăр малтан ури, çурăм шăмми, ĕнси ыратнине калатчĕ. Халĕ кун пирки пачах шарламасть. Ытла ансат та çăмăл меслет пулнипе çеç чылайăшĕ желатин пулăшасса ĕненмест.

Касхине 1 чей кашăкĕ желатина вĕресе сивĕтнĕ çур стакан шыва ямалла. Ирхине стакана шывпа тултармалла, 1 чей кашăкĕ пыл хушса вырăлла ĕçмелле. Сиплев курсĕ – 10 кун. Ун хыççăн вунă кун канмалла. Çапла – виçĕ хутчен. Профилактика тĕллевĕпе сиплев курсне çулсерен ирттермелле.

**ТАТЬЯНА.**

# Купăста çулçи

Çемьере кам та пулсан ӳсĕрме тытăнсанах кăкăрне купăста çулçипе çыхатăп. Пĕр пысăк çулçине тататăп та 1-2 минутлăха вĕрекен шыва чикетĕп. Унтан пыл сĕрсе кăкăр çине хуратăп. Ӳслĕк вăйлă аптратсан иккĕмĕшне çурăм çине те вырнаçтаратăп. Пĕчĕкрех футболка тăхăнсан вăл çулçăсене çĕрĕпех тытĕ, ӳкме памĕ. 3-5 кунтан ӳслĕк иртет.

*Сипленме пуçличчен тухтăрпа канашламалла.*

**ВАЛЕНТИНА.**

## КАЙĂК-КĔШĔК

# Пӳртрех çитĕнтеретпĕр



**Путенесене пӳртре те усрама пулать теççĕ. Усă сывлăшсăр çитĕнеççĕ-и вĕсем?**

**Валентина МАКСИМОВА.**

Путенесене пӳртре те ӳстерме май пур. Чи кирли – пӳлĕме кашни кун усăлтармалла. Вĕсем витĕр çиле тата янкăр çутта юратмаççĕ. Çавна май читлĕхе чӳрече умне вырнаçтармалла мар. Кайăксене хăратма юрамасть, унсăрăн çăмарта тума пăрахаççĕ. Сывлăш температури 18-20 градус ăшăра путене хăйне аван туять. Ăна кунне 16-17 сехет çутă кирлĕ. Путенесене яланах тутă тытмалла тата вырăнне вăхăтра тасатса тăмалла.

Читлĕхе кайăк шутне кура ăсталаççĕ. Яппун путенисене çемьепе – пĕр аçапа тăватă ама – уйăрмалла. Вĕсем валли 30х40х20 калăпăшлă читлĕх ăсталаççĕ. Тимĕр сеткăллă урая чалăшларах сараççĕ, çăмарта пухăнмашкăн ăна тулаш енчен аваççĕ. Сетка айне каяш валли савăт вырнаçтараççĕ.

Çамрăк кайăк-кĕшĕк валли пысăкрах читлĕх кирлĕ. Сăмахран, 30 пуç валли 90х40х20 сантиметртан кая мар калăпăшлă пулмалла. Вырăн сахалрах пулсан читлĕхсене пĕр-пĕрин çине, аялти рете вара урайĕнчен пĕр метртан кая мар çӳллĕшĕнче вырнаçтармалла.

## ШУТА ИЛМЕ

# Кăмăл-туйăм вăрттăнлăхĕсем

**Тепĕр чухне сăлтавсăрах кăмăл пусăрăнать, вăй-хал чакать. Çакă тĕрлĕ сăлтавпа сыхăннă. Сăмахран, тăтăшах "çук" вырăнне чуна хытарса "юрать" тесен;**

йĕрес вырăнне – кулсан;

канмасан;

тĕллевсĕр асапалансан;

çиленсе пурăнсан;

кăмăла кайман ĕçпе аппалансан;

килĕшмен çынпа хутшăнсан;

йĕри-таври çынсем ытларах япăххи пирки калаçнăран;

политика, коммуналлă хуçалăх пирки нумай калаçнăран;

çынна "çинĕрен";

ыттисем мĕнле пурăннине сӳтсе явнăран;

йăлăхтарнă ĕçре тытăнса тăнăран;

хăратсан;

такам килессе /Хĕл Мучи, принц, олигарх/, пурнăç улшăнасса кĕтсе пурăнсан;

пуриншĕн те хамăра айăпласан, ăнăçсăр, телейсĕр тесе шухăшласан.

*Вăй-хал хушăнтăр, хавхалану килтĕр тесен нумаях та кирлĕ мар. Çак сĕнӳсене çеç пăхăнмалла:*

Çĕнĕ çынсемпе паллашмалла;

пĕлĕве анлăлатмалла, çĕннине шĕкĕлчемелле;

çулçӳреве тухмалла;

хамăр хăранине парăнтармалла;

çĕнни патне ăнтăлмалла;

усăлса çӳремелле /ĕçе чупни, лавккана кайни шута кĕмест/;

пултарулăхпа аппаланмалла;

кăмăллă, пире шанакан, ĕненекен çынсемпе хутшăнмалла;

кĕлеткене çирĕплетмелле;

хăвăр таврари лару-тăрăва çĕнетмелле;

кăмăла тивĕçтерекен ĕç тумалла.

## УСĂЛЛĂ КАНАШСЕМ



# Тĕлĕнтермĕш лавр çулçи

Лавр çулçи кашнин килĕнчех пур. Анчах унăн тĕрлĕ паха енĕ пирки пĕлекен сахал.

Çăвартан ырă мар шăршă кĕрсен кунне темиçе хутчен лавр çулçи чăмламалла. Кун хыççăн сехет ĕçмелле-çимелле мар.

Канăçсăр, лăпкă çывăрайман ачан минтерĕ ăшне темиçе лавр çулçă çĕлесе хурсан вĕсем тутлă ыйха путĕç. Валериана тымарĕ пекех лăплантарать лавр.

Чирлĕ çын выртакан пӳлĕмри бактерисене тасатма, сывлăша усăлтарма темиçе çулça вĕри шыва ярса 15 минут лартмалла. Шыва куркапа е тирĕкпе пӳлĕме лартмалла.

Настой хатĕрлеме 10 лавр çулçине 3 стакан вĕри шыва ярса 3 сехет лартмалла. Кунне виçĕ хутчен çуршар стакан ĕçмелле. Вăл юнри сахăр шайне чакарать, туберкулезпа чирлисене иммунитета çирĕплетме пулăшать.

Лавр çăвĕ хатĕрлеме 1 апат кашăкĕ вĕтетнĕ лавр çулçине 1 стакан тип çупа хутăштармалла та тĕттĕм, усă вырăнта 1 эрне лартмалла. Сăрăхтармалла та ӳт çинчи тĕрлĕ сурана сиплеме усă курмалла.

Ура вăйлă тарласан, ырă мар шăршă кĕрсен çакăн пек ванна тума юрать. 30 лавр çулçине 1 стакан вĕри шыва ярса 3 сехет лартмалла, ăшă шывпа хутăштармалла.



АХ, АНЧАХ...

# Кĕтрĕм сана...

Нинăпа Руслан пĕр-пĕрне вăтам шкула куçсанах килĕштерчĕç. Пĕлӳ çуртне пĕрле кайрĕç-килчĕç, пуласлăхĕ пирки пĕрре мар сăмах хускатрĕç, ялхуçалăх институтне кĕресси пирки калаçрĕç. Вуннăмĕш класра вĕреннĕ чухне юрату юрри кĕвĕлеме тытăнчĕç. Аттестат илсен иккĕшĕ те агроном специальноçне алла илме ыйту çырчĕç. Анчах Русланăн вĕренме вăхăт пулмарĕ, çар тивĕçне пурнăçлама ăсатрĕç ăна. Нина савнине кĕтсе илме тупа турĕ. Пит васкавлăн уйрăлма тиврĕçке хĕрпе каччăн. «Эпĕ сана виççĕ мар, вунă çул та кĕтме хатĕр», – терĕ вĕрин чуптуса пике.

Вăхăт шурĕ. Юратуллă çырусем чарăнмасăр вĕçрĕç. Виçĕ çул сисĕнмесĕрех хыçа юлчĕ. Анчах сасартăк Руслантан хыпар çухалчĕ. Тăван ялтах ĕçе пуçăннă Нина каччинчен çыру кĕтсе хăшкăлчĕ. Аптăранă енне çар чаçне шăрçаларĕ. «Демобилизаци йĕркипе çартан кайнă», – пĕлтерчĕç унтан.

Пилĕк çул та иртрĕ, вуннă та хыçа юлчĕ. Нина сăмахне тытса пурăнчĕ, урăх каччăсемпе хутшăнмарĕ. Ашшĕ-амăшĕ хĕрне хӳтерсе те пăхрĕ, усси пулмарĕ. Йăмăкĕ те качча тухрĕ, ача-пăчаллă пулчĕ. Тантăшĕсем икĕ-виçĕ пепке те çуратрĕç. Колхоз кантурĕнче тĕп бухгалтерта ĕçлекен Герман Нинăпа ялан ăшшăн калаçатчĕ. Кăштах уксахлатчĕ хăй, туяпа çӳретчĕ. Ялти каччăсем вара ватă хĕр çине çавăрнса пăхма та пăрахнăччĕ. Ашшĕамăшĕ ывăлĕ вилнĕ тесе чиркӳре çурта та çутма тытăннăччĕ ĕнтĕ.

Пĕррехинче Нина ĕç вĕçленеспе пуçлăхпа калаçма кантура пычĕ, ăна Герман кĕтсе илчĕ. Урăх никам та çук самантпа усă курса-ши: «Нина, çитет Руслана кĕтсе. Эпĕ сана чунтан юрататăп, тархасшăн, качча тухсам. Арăм пулма килĕш!» – терĕ. Уяр çанталăкри аслати евĕр пулчĕç сăмахсем. Нимĕн чĕнмесĕр тухса утрĕ Нина кантуртан. Нумайччен шухăшласа пуçне ыраттарчĕ, ватă хĕр ятне илтнĕскер каçхине те çывăраймарĕ. «Вунă çул та кĕтетĕп мар-и сана? Ăçта эсĕ, Руслан? Хĕр чысне саншăнах упрарăм. Халĕ мĕн, Герман арăмĕ пулас-и? Вăл ырă кăмăллă, çынсемпе калаçма пĕлет. Хирĕçлесе мĕн калас?» Куççулĕ юхрĕ те юхрĕ.

Герман хистенипе ăна качча тухрĕ Нина. Ватлăхра пĕччен юласран хăрарĕ. Пилĕк çулта пĕр ывăлпа виçĕ хĕре кун çути парнелерĕç.

Нинăпа Герман пĕрлешниултă çул иртсен тăван тăрăхне арăмĕпе тата виçĕ ачипе уксахласа Руслан таврăнчĕ. Нина юратнă каччипе курса калаçма ăнтăлчĕ. Майлă самант тупăнсан хут татки тыттарчĕ. «Хамăрăн юратнă вырăна пыр. Кĕтетĕп», – тесе çырчĕ. Хĕрарăм миçе çул мĕншĕн пĕр хыпар та яманнине ыйтсан: «Эпĕ вилсе чĕрĕлнĕ çын, иртнине аса илес килмест», – терĕ арçын. Чылайччен калаçрĕç савнисем. Вĕсене çанталăкĕ те çынсем курасран сыхларĕ. Икĕ хутчен тĕл пулма май килчĕ.

Ялта çур уйăх пек пурăнсан Руслан çемйипе Инçет Хĕвелтухăçне таврăнчĕ. Мĕн сăлтава пула çирĕм çула яхăн çухалса пурăннине ашшĕпе амăшне те каламан пулать.

Тăхăр уйăхран Нинăн ывăл çуралчĕ. Упăшки хирĕçлеменнине кура Руслан ят хучĕç ăна. Вăхăт малалла шурĕ. Германпа Нина ачисем те ӳссе тĕрлĕ çĕре саланчĕç. Хĕрĕсем качча тухса çемйисемпе юнашар ялта, тĕп хулара, юнашар республикăра тĕпленсе пурăнаççĕ. Аслă ывăлĕ çар çынни. Кĕçĕнни Атăл çинче çӳрекен теплоходра туристсене илсе çӳрет. Вунă мăнукĕ куç тулли çитĕнет. Ялта Руслан çинчен тахçанах маннă. Ашшĕпе амăшне те, шăллĕпе аппăшне те юлашки çула ăсатнă. Нина çеç асран кăлараймасть ăна. Ватлăх çулĕсем пуснă пулсан сад пахчи çумĕпе иртнĕ чух çамрăклăхне, юратăвне аса илетех. Ытла та тарăн йĕр хăварнă-çке вăл.

**Л.ЕГОРОВА.**

КУН ПЕК ТЕ ПУЛАТЬ

# Тĕрĕслев

Савнин çуралнă кунне уявлама пуçтарăннăччĕ ун чухне. Коля 23 тултарнине анлăн паллă тума шухăшларĕ. Çавăн чухне юратăвăмăн чылай тусĕпе паллашрăм та. Хăшне-пĕрне малтанласах пĕлеттĕм, анчах Сергее пуçласа шăпах уявра куртăм. Тӳрех кăмăла кайрĕ вăл. Кольăн ытамĕнче лартăм пулин те куç унран кайма пĕлмерĕ. Ытла та чипер-çке. «Мĕншĕн савни мар-ши» текен шухăш пуçа пĕрре мар килчĕ.

Уяв хыççăн меллĕ самант тупса Кольăран Сергей çинчен тĕплĕнрех ыйтса пĕлтĕм. Ялта пурăнать иккен, хула пурнăçне килĕштермест. Трактористра тăрăшать. Тĕрĕссипе, вăл кунашкал тимĕр урхамахпа утланса çӳренине калаймăн та. Вĕсен алли хуп-хура пулаканччĕ. Сергей тирпейли вара тӳрех палăрать. Кулли тата мĕне тăрать! Килĕштерекен хĕрĕ те пур иккен. Анчах унпа час-часах хирĕçеççĕ. Ара, паллă ĕнтĕ, студенткăн ялта кун кунлакан савнине час-часах курма май çук. Çамрăк чĕре вара çепĕçлĕхсĕр, ачашлăхсăр тунсăхлать. Пушшех те, Сергей мăшăрлансан та ялтах тĕпленме ĕмĕтленет. Света вара хулара пурăнасшăн. Çавăнпах чылай чухне вĕсен хушшинчен хура кушак чупса иртет.

Пĕррехинче Коля усăлма чĕнчĕ. Сергей хулана килнине, вĕсемпе тĕлпуласса пĕлтерчĕ. Çапла Светăпа та паллашрăм. Сарăскер, чиперскер, хӳхĕмскер, ăшшăн калаçаканскер темле качча кăмăлне те каймалла. Сергей шăпах ăна килĕштернинчен те тĕлĕнмелли çуках.

Кун хыççăн та пĕрре мар тĕлпултăмăр икĕ мăшăр. Кафене, кинона çӳрерĕмĕр, конькипе ярăнтăмăр... Эпĕ вара Сергее кашнинчех вăрттăн сăнаттăм. Юратрăм теейместĕп, анчах питех те килĕштереттĕм хураскерне. Çакна ыттисем сисесрен хăраттăм та.

Кăштахран Сергейпа Света хушшинче темшĕн хаяр «вăрçă» пуçланчĕ. Малтанах каччă сайра хутра та пулин хулана килетчĕ-ха, каярах çула пачах тухми пулчĕ. Çапла уйрăлсах кайрĕç вĕсем. Тахăш самантра эпир те, шăкăл-шăкăл пурăнакансскерсем, пĕр чĕлхе тупайми пултăмăр. Кольăпа çӳреме пăрахрăмăр.

Çакăн хыççăн хушăран... Сергей шăнкăравлама тытăнчĕ. Пурнăçпа кăсăкланчĕ, шухăш-кăмăла тĕпчеме хăтланчĕ. Калаçаттăм. Ара, чунăмра туйăмсем сĕвĕрĕлмен-çке. Коля ыйтнипе шăнкăравлать пулĕ теттĕм. Çакăн пирки хăйне те пĕрре мар каларăм. Ялан хирĕçлетчĕ. Тусĕпе ман пирки сăмах пачах пуçарманнине çирĕплететчĕ. Пĕррехинче Сергей тĕлпулма ыйтрĕ. Килĕшрĕм. Кăмăлĕ япăххине пĕлтерчĕ, чунне пусарма хаяррине тутанма кăмăлĕ пуррине систерчĕ. Çавăнпах хăнана чĕнчĕ. Хирĕçлемерĕм. Çапла пĕрикĕ черкке пушатрăмăр. Çумарах та çумарах вырнаçрĕ йĕкĕт. Унран çапакан ăшă хум ахаштарчĕши, чуптума та ирĕк патăм. Каç пулнине кура хăнара юлма ыйтрĕ пĕлĕшĕм. Эпĕ вара йăнăш утăмран пăрăнса çĕр каçас кайрăм. Тăхăнтăм та тухса утрăм. Сергей вара алăк уçма та тăмарĕ, кӳренеçи пулчĕ. Çакăн пек пуласса пачах кĕтменччĕ ахăр, ахальтен мар ӳкĕтлерĕ. Хула урамĕпе утнă май хам чутах хур курманнине пуçра çавăрма тăрăшрăм, текехрен сыхланма тĕв турăм.

Пĕр хушăран çав тăрăхри йĕкĕтсен хăйне евĕр йăла пурри хăлхана кĕчĕ. Каччă хĕрпе уйрăлсан унăн юлташĕсем пикепе вырăн ăшăтаççĕ. Те хăйне евĕр тавăру ку, те тĕрĕслев – çакна халĕ те ăнланаймастăп. Ку тĕрĕслевре эпĕ мĕнле паллăна тивĕçрĕмши тата? Е пĕрлех çĕр каçнă тесе суйрĕ-ши? Нумайччен асаплантарчĕç çак ыйтусем. Çăмăлттайла хăтлансан таса ята та часах варалама пулать иккен.

Каярах Сергей Светăнах качча илнине пĕлтĕм. Хĕр чĕри айĕнче пĕчĕк чун тĕвĕленнĕ иккен. Нумаях пулмасть мăшăр пĕрлешнĕренпех хулара пурăннине илтрĕм. Юратнă мăшăрне Света хăй енне çавăрса Шупашкартах тĕпленме хистеме пултарнăшăн савăнтăм та.

**ТАРУК.**
Шупашкар хули.

ЧУНРИ

# Туйăмсен мĕлки

Ах, ытла та тутлă-çке ирхи ыйхă. Вăранас та килмест. Тĕлĕкĕ тата мĕн тери авансскер! Çапла, мĕн куç уçнăранпа сан пирки шухăшлатăп. Ниеппе те асран кайма пĕлместĕн. Илемлĕ кĕл чечек çыххипе килтĕн пек. Тин каснă евĕр хӳхĕм вĕсем, шупка хĕрлĕ тĕслĕскерсем. Вăрăм туналлăскерсене, çурăму хыçĕнчискерсене, малтанах асăрхаман та. Илĕртӳллĕн тыттартăн та питĕ хĕпĕртерĕм, сана хамăн ытама илтĕм. Ăшă çупăрлавна чăн пурнăçри евĕрех туйрăм. Хĕрӳллĕн чуптурăм... Шăпах çак вăхăтра вăрантăм та.

Чим-ха, ирхи тĕлĕк теме пĕлтерекен марччĕ-и? Эсĕ шăнкăравласса, тен, тĕлпулăва чĕнессе систермест-и вăл? Тем пекехчĕ. Юлашки вăхăтра чун суранĕ пулса тăтăн-çке.

Сан пирки маннăпа пĕрехчĕ эпĕ. Кашни ĕлĕкхи савнине асра тытайăн-и? Пушшех те эсĕ те, эпĕ те тахçанах çемьеллĕ. Çук-ха, йăнăшатăп. Хыççăн чупнă мĕнпур йĕкĕте астумасан та сана вĕсен йышĕнче уйрăммăн палăртмалла. Эсĕ – пачах урăхла йышран, чунăмра, чĕремре йĕр хăварнăскер.

...Юратсах çӳрерĕмĕр темелле. Шăпа пирĕн çамрăк çулсене икĕ хутчен те пĕрлештерчĕ. Те расна пурăнма пӳрнерĕн, те хамăр те лейĕмĕре упрайманран уйрăлса кайрăмăр. Кашни урăх туйăм шырарĕ. Çапла часах эсĕ мăшăрлантăн. Çак хыпара питĕ йывăррăн йышăнтăм ун чухне. Тепĕр чухне çĕрĕçĕрĕпе макăраттăм та. Сана яланлăхах çухатнине эсĕ авлансан çеç ăнлантăм. Хама темле хаклă та паха япала çухатнăн туйрăм. Анчах чавса çывăх та...

Пĕр-икĕ çултан эпĕ те упăшка тупрăм. Çапла сан пирки мантăм темелле. Апла пулин те тепĕр чухне асăма килеттĕн. Мăшăрăм сиввĕн калаçнă, таврăнмасăр ашкăнса çӳренĕ каçсенче пушшех иртнĕ кунсене таврăнаттăм. Вĕсен ăшшипе те пулин килеснес теттĕм-ши? Эсĕ-çке пачах урăх çын: пĕтĕм пурнăça, кулленхи ыйтусене хăвăн ална илекенскер, хĕрарăма хисеплекенскер. Мана вара пачах урăх арçын лекрĕ. Тиркекене тирĕк тĕпĕ тени çакна пĕлтерет ахăр. Ара, иксĕмĕр уйрăлнинче эпĕ ытларах айăплă-çке. Тиркешеттĕм, санра кăлтăк шыраттăм. Айван пулнă мар-и?

Ырăпа аса илеттĕм те манма тăрăшаттăм сана. Тепĕр чухне упăшкапа çурăмпа çавăрнса выртсан та асăма килеттĕн. Çакăн пек чухне çемье санпа чăмăртаманшăн ӳкĕнеттĕм.

Упăшка айккине чупнине чăтса ывăнтăм та çулталăк каялла уйрăлтăмăр. Пĕччене пурăнатăп çапла. Çĕнĕ çула та хăраххăнах кĕтĕм. Тĕрĕссипе, çак каç асамлă пулнине ĕненетĕп. Анчах 2015 çула кĕтнĕ май çак асама темшĕн шанмарăм, пурнăçăмра нимĕн лайăххи те пулмассăн туйăнчĕ. Апла мар иккен. Асам пурах: саламлама шăнкăравларăн-çке. Чăн парне мар-и çакă? Мана хавхалану кирлине мĕнле туйрăнши? Ăçтан тавçăртăн? Кам ячĕ-ши сана çак ырлăхпа – пĕлместĕп, анчах çĕнĕрен чĕрĕлтĕм, пурăнас хăват хушăнчĕ. Нумай та калаçмарăн: Çĕнĕ çулпа çеç саламларăн, мĕнле пурăннине ыйтрăн. Пĕчченнине пĕлсен чăннипех тĕлĕнтĕн, шеллерĕн. Калаçас кăмăлу пулсан хăть те хăш самантра та шăнкăравлама юранине систертĕм те сывпуллашрăмăр.

Сана халĕччен те асран кăларманччĕ-ха эпĕ. Анчах чĕремри хăват тахçанах сĕвĕрĕлнĕччĕ, сан ятна аса илмессерен чĕрем калт! тапмастчĕ. Тунсăхпа та, савăнăçпа та мар – ахаль çеç асăма килеттĕн. Санпа пĕрле пулманнишĕн ӳкĕнме те пăрахнăччĕ. Халĕ вара чуна хĕлхем хыпрĕ. Тахçанхи туйăмсен сирĕлмен мĕлки-ши ку? Е таса юратăвăн сыхланса юлнă вăрлăхĕ-и? Чуна йывăр чухне ăшăнмалли кăвар хĕрӳлĕх мар-и? Калама пултараймăп. Анчах санăн сассу чунăмри, чĕрем тĕпĕнчи хĕлхе пырса тиврех, илемлĕ сĕрлевпе хумхатрех.



Халĕ эсĕ шăнкăравласса куллен кĕтетĕп. Айванла çакă, пĕлетĕп. Анчах нимĕн те тăваймастăп. Тен, çак шанчăк мана вăй-хăват кӳрекенскер пулĕ, çунат сартараканскер, пурăнма хавхалантараканскер. Чун суранне сиплеме пулăшĕ...

**ЯНА.**



/Малалли. Пуҫламăшĕ иртнĕ номерте/.

## Николай ВАСМАТ
# Тупăлча

Хальхи ҫамрăк хĕрсемпе хĕрарăмсем арҫынсенчен ытларах та пĕлеҫҫĕ темелле. Вĕсем аслă шкулсенче арҫынсенчен нумайрах вĕренеҫҫĕ, пысăк укҫа ĕҫлесе илес тесе тăрăшаҫҫĕ. Арҫынран нимĕн те кĕтсе тăмаҫҫĕ, хăйсемех мĕн кирлине тупăштарма пултараҫҫĕ. Кун пек чухне, паллах, хăть мĕнле арҫынна та хирĕҫ сăмах калама хатĕр вĕсем. Эпир ача пулнă вăхăтсенче пачах урăх саманаччĕ. Ҫавăнпа ун чухнехи хĕрарăмсем арҫынна хирĕҫ калама мар, сăмах чĕнме те хăраса, чĕтресе тăнă. Кил-ҫуртра арҫын пулмасан йышлă ачисене мĕнле ҫитерсе тăрантарма пултарнă пĕччен хĕрарăм? Аннен чун-чĕри епле ыратнине хам курса, ăнланса ўснĕҫке. Шухăшласан кăшкăрса йĕрсе ярас килет. Анчах... Чăваш хĕрарăмĕ йăвашрах, уҫă чунлăрах пулнине эпĕ килтен тухса кайсан ăнланса илтĕм. Вырăссем те пирĕн евĕрех-ха, анчах вĕсем пирĕн хĕрарăмсемпе танлаштарсан хăйсене ҫирĕпрех тытма пултараҫҫĕ. Кашни япалашăн хыпса ҫунмаҫҫĕ тата упăшкисене те алăра тытма пултараҫҫĕ. Ҫакăн пирки вĕсене мухтамалла тесе шухăшлатăп. Хăш чухне ҫавсене аса илсен шухăша путатăп: «Чăваш хĕрарăмĕсем мĕншĕн ытла айванши?» – тесе шухăшласа та пăхатăп. Пур-ши вĕсен хушшинче пысăк уйрăмлăх? Халĕ те-ха ҫакă асра: вăрҫăран таврăнайман арҫынсен ҫинчен сăмах хускататчĕҫ те пĕрисем ҫавăнтах саппун аркипе питне хупласа тӳрех кăшкăрса йĕме пуҫлатчĕҫ, теприсем вара нимĕн чĕнмесĕр пӳртрен тухса каятчĕҫ. Вырăс хĕрарăмĕсем ҫакăн ҫинчен калаҫнисене те итлеме тӳр килчĕ. Вĕсем пачах урăхла шухăшлаҫҫĕ тейĕн, малтан мĕнле ĕҫ пулса иртме пултарнине сӳтсе яваҫҫĕ те, каярахпа тин епле пулса иртме пултарнине аса илеҫҫĕ. Кунта пĕрисем ăсларах, теприсем ухмахрах темелли ҫук. Мĕншĕн пĕр япала ҫинчен тĕрлĕ халăх тĕрлĕрен шухăшлать? Ăнланатăп эпĕ: чăваш хĕрарăмĕсенчен нумайăшĕ вĕренмен. Тен, ҫакă пурнăҫ ҫулне такăнтарса пынă? Вĕренмен ҫын кирек ăҫта та хăйне мĕскĕн тытать, вăтанать, хăйне кăтартма та пултараймасть.

Турра ĕненнине, шаннине пĕр пекех тесе каламалла. Вырăссем те, чăвашсем те пĕр Турра шанаҫҫĕ, ĕненеҫҫĕ. Юнлă вăрҫă иртсе кайсан та ҫавăнта пуҫĕсене хунă упăшкисем вăрҫă хирĕнчен килне таврăнасса шанма пăрахман хĕрарăмсем, – терĕ вырăсла калаҫакан ҫын куҫҫульне шăлса. – Юрĕ, Виктор, тултар-ха пĕрер черкке, сăмах темшĕн малалла тăсăласшăн мар».

Нумай кĕттермерĕ, пирĕн ҫине тепĕр хут пăхса илсен ачалăхне аса илсе сăмахне ерипен малалла тăсрĕ.

«Эпĕ килте пĕччен ўсмен-ха, манăн пичче те пурччĕ. Анчах аттесем тăван мар. Тĕрĕссипе, унăн ашшĕ вăрҫăран таврăнайман та мана анне ют арҫынран ҫуратнă. Вăрҫă хыҫҫăнах ман пек «тупăлча ача» ялта нумайччĕ. Хам пурăнакан касрах эпир уйрăммăн курăнса тăраттăмăр. Манран инҫех те мар пурăнакан хам пек аттесĕр ачапа ҫывăх паллашса кайсан эпир унпа пĕрле ҫӳреме пуҫларăмăр. Ҫавăнпа ҫапла калас килет: ӳсрĕм эпĕ пĕччен, анне ҫумĕнче. Пĕртен пĕр пулăм, атте ҫумне тĕршĕнсе, унăн ытамне кĕрсе ӳксе ачашланма май пулманнипе хытă тарăхаттăм. Урама выляма тухсан эпир, пĕчĕк ачасем, ыттисемпе пĕрлех вылянă, чупнă, кулнă, ҫырмана анса пулă тытнă е ҫерем каса-каса пĕве пĕвеленĕ. Ҫавăн чухне мана кăна мар, тепĕр ачана та: «Эс аттесĕр «тупăлча ача, тупăлча ача!» тесе мăшкăллатчĕҫ. Ҫапла йĕкĕлтени чĕрене ҫав тери ҫунтарнипе эпĕ кăшкăрса йĕрсе киле чупса кĕреттĕм те тӳрех аннен чĕркуҫҫийĕ ҫине пуҫа хурса ĕсĕклеме пуҫлаттăм. Ҫав вăхăтра анне ашшĕсем пур ачасем каллех мана вăрҫтарнине сиссе хăй те ман пекех куҫҫуль юхтарса ахлататчĕ. Унтан: «Ан йĕр-ха, ачам, татăлса. Эсĕ ытла пĕчĕк-ха ҫавна ăнланма», – тетчĕ. Ҫав асаплă, чуна ҫунтаракан вăхăтсем пире, айăпсăр ҫынсене, пĕр шелсĕр ҫунтарма пултарнине ăнланма пултарайман-ха. Кунта ҫылăха кĕме ĕлкĕреймен пĕчĕк ачан айăпĕ ҫук паллах. Нуша курма пире шăпа тухнă пуль. Унран хальччен никам та пăрăнса юлма пултарайман, пултараймасть те. «Ҫӳлте» ҫырнинчен иртме пулмасть. «Хамăр пурăнакан ялта ҫапла хытă кӳрентереҫҫĕ пулсан эпир кунтан инҫетри хулана тухса тарăпăр, ҫынсем пĕлмен, пире курма пултарайман вырăна», – тетчĕ хăш чухне анне мана. Ҫав сăмахсене илтсен темшĕн эпĕ тӳрех лăпланаттăм. Куҫран куҫҫуль юхма та ҫийĕнчех чарăнатчĕ. Ачалăх ҫавăнпа ачалăх ĕнтĕ, темле йывăр самантсенче те хăть хăҫан та выляс, савăнас, чупас килет. Пĕр самантран каллех урама чупса тухаттăм та хама мăшкăллакан, кӳрентерекен, йĕкĕлтекен ачасем патне пырса вĕсен куҫĕнчен хумханса, пăлханса пăхаттăм. Шарламасан пĕрле выляма пуҫлаттăм. Ăш мĕнле ҫуннине ҫав самантсенче эпĕ хам кăна пĕлнĕ паллах. «Пурин те ашшĕсем пур, пĕр эпĕ кăна аттесĕр», – тесе пĕр-пĕр тĕттĕм кĕтесе пытанса мĕн чухлĕ куҫҫуль юхтарман-ши? Юлташсен ҫывăхне пыма вăтанса тăни тата мĕн чухлĕ пулнă! Вĕсем алхаса-алхаса урамра чупаҫҫĕ, ҫав самантра эпĕ картишне тухатăп та чус хушшинчи ҫурăкран вĕсене вăрттăн сăнатăп. Тухмалла-и вĕсем патне выляма е ҫук? Ҫулла ял ачисем хăть хăҫан та ҫырмана анса шăрăх вăхăтра шыва кĕме тата пулă тытма ҫерем касса пĕве пĕвелетчĕҫ. Ҫеремне вара ҫӳллĕ ҫырана хăпарса кĕреҫепе касса каялла ҫырма тĕпне йăтмалла. Пĕрисем ҫерем касса тăраҫҫĕ, теприсем, пирĕн пек пĕчĕккисем, ҫав ҫеремсене аяла, ҫырма тĕпне йăтаҫҫĕ. Унта, паллах, аслисем сăнаса, кăтартса тăраҫҫĕ. Вĕсемех камăн мĕн чухлĕ йăтмаллине палăртса хураҫҫĕ. Палăртнă ҫереме йăтса пĕтермесен ҫав ача шыва кĕреймест. Мана ыттисенчен икĕ хут нумайрах йăтма хистетчĕҫ. Ҫурма тăлăх ытти ачана ытларах лекетчĕ. Нимĕн тума та ҫук. Аслисем калание итлемеллех. Унсăрăн ҫавăнтан хăваласа яма, тепре килсен шыва кĕме мар, хĕнесе яма та пултаратчĕҫ. Хăшĕсем вăрҫтарса: «Ҫапла кирлĕ сана – тупăлча ачана! Пур-ҫке санăн аҫу, юратмасăр сана вĕлтрен хушшине пăрахса хăварнă та», – тесе мĕн чухлĕ йĕкĕлтемен-ши. Ҫакă тата ытларах тарăхтаратчĕ. Имĕш, атте мана юратмасăр урăх ҫемьере пурăнать... Эпĕ хама хăть хăҫан та мĕскĕн ача пек туйнă. Ыйтаттăм аннерен: «Манăн атте ăҫта? Ма килмест ман пата?» Анне ҫапла хуравлатчĕ: «Сан аҫу вăрҫăран таврăнчĕ аманса. Урăх ан ыйт манран. Хама та хурлантаран».

Эпĕ пурпĕрех вăл каланă сăмахсене итлемесĕр пĕр чарăнми ăна тарăхтараттăм: «Анне, мĕн-ма ҫуратнă мана, пĕччене? Анне, эсĕ мана тĕрĕсне кала-ха, вĕлтрен хушшинчен тупса кĕтĕн-и мана? Тупăлча-тупăлча тесе ялан мана мăшкăллаҫҫĕ, йĕкĕлтеҫҫĕ касăри ачасем!» Ҫакăн пек чухне чун тăвăлса ҫитнипе тула тухса каяттăм та картана кĕрсе тĕттĕм вырăна пытанса ачалла тарăн шухăша путаттăм». Кам ман атте? Вăл халĕ ăҫта? Мĕншĕн вăл мана вĕлтрен хушшине пăрахса хăварнă-ши? Ӳссе ҫитĕнсе пысăклансан эпĕ ăна... Эпĕ ăна ăҫта та пулин тĕл пулсан чышкăпа ҫапа-ҫапа, урапа тапа-тапа хытă хĕртĕп-ха, – шухăшлаттăм ача ăсĕпе.

Пĕррехинче ҫапла шухăшласа ларнă самантра ман пата таҫтан-муртан хам пекех пĕччен качака путекки пырса тăчĕ те «ме-кек, ме-кек» тесе ҫухăрса куҫран тĕллесе пăхрĕ. Алăпа хăратма пăхатăп ăна – вăл тарма шухăшламасть те. «Эсĕ те ман пекех тупăлча качака путекки-и?» – ыйтрăм унăн куҫĕнчен хăй пекех тĕллесе. Те ăнланчĕ вăл эпĕ мĕн ыйтнине: «Ме-кек!» – тесе ҫухăрса ярса ман ҫума пĕр шикленмесĕр тĕршĕнчĕ. Выртать ҫумра пĕр хăрамасăр куҫран пăхса. Темшĕн ҫавăн чухне ҫав качака путекки те ман пекех тăлăх ача пулнăн туйăнса кайрĕ. Эпĕ унпа сăмах хушсах калаҫма пуҫларăм. Вăл ăнланнă евĕрех куҫран пăхать, хăй нимĕн те шарламасть. Ҫакна курсан ăна майĕнчен ыталаса илсех пуҫĕнчен ачашларăм: «Эсĕ те ман пекех пĕччен путек иккен...» Хам вара сисмесĕрех тарăн шухăша путатăп: эпĕ таҫта-таҫта инҫетри пĕлĕт ҫине вĕҫсе хăпарнă пек. Мана никам вăрҫтармасть, йĕкĕлтемест, хистесе ĕҫлеттермест.

Унта пурте лайăх, тараватлă, никам никама вăрҫмасть, пурте кулса ҫеҫ калаҫаҫҫĕ, пĕрне пĕри хисеплесе алă ҫинче йăтса ҫӳреҫҫĕ. Унта хĕвел те ăшăрах, уйăх та ҫутăрах пек. Ҫавсене хамăн куҫпа курса тăнă май хăш вăхăтра ыйхă путнине пĕлеймесĕрех юлаттăм. Тĕлĕк курнисене пĕртте аса илейместĕп: тутлă ыйхăра курăнмасть пулмалла. Мĕн вăхăт ҫывăрнă, калама пултараймастăп. Анне мана хăшкăла-хăшкăла шыраса тупсан йӳҫĕ куҫҫульне юхтарса питкуҫран, тутаран чуптăватчĕ те: «Ан хурлан, ачам, никам курман чух тухса тарăпăр ялтан. Унта, эпир кайнă вырăнта, пире никам та пĕлмест. Хамăр иксĕмĕр ҫеҫ пĕрне пĕри юратса пурăнăпăр», – тетчĕ ялан. Ача пулсан та хам нуша курса пурăннине эпĕ ăнланса ҫитнĕ пуль ҫав, ăш тăвăлса ҫитсен аннен куҫĕнчен пăхса ҫилленсех ыйтаттăм: «Анне, мĕн-ма мана ҫуратрăн ҫут тĕнчене нуша курса пурăнма? Ытти ачасем пурте савăнăҫлă кулса, выляса кăна ҫӳреҫҫĕ. Хăвна ҫăмăл пулĕ тесе шухăшларăн пуль эпĕ ўссе ҫитĕнсен, ху ватăлсан пурăнма? Хăш-хăш вăхăтра кăнтăрла выляма тухсан та хĕвел ҫути куҫа илĕртмест, уйăх ҫине пăхсан та вăл мана илемлĕ курăнмасть. Ыйхăран хăраса вăранса каятăп та хама такам хăратать пек туйăннипе кăшкăрса йĕме тытăнатăп мар-и? Малашнехи кун-ҫул манăн мĕнле килсе тухĕ?

/Малалли пулать/.

## ВУЛАКАН ПУЛТАРУЛĂХĔ

### Галина МАКАРОВА

### Ҫĕнĕ ҫул ырлăхĕ

Шурă юр ташши
Мĕншĕн савăк-ши?
Тыткăнлать эрешлĕ ĕнчипе.
Селĕм кавирне
Сарнă ҫĕр ҫине,
Илĕртет илемлĕ тĕнчине.

Ҫутă ĕмĕтпе
Савнă туссемпе,
Кавир ҫийĕн утатпăр ĕҫе.
Уҫă кăмăлпа
Чăн юратупа,
Пурнăҫлатпăр хамăр тивĕҫе.

Туслăх вăй илет,
Ырă ҫак тивлет,
Пурнăҫа сӳнми телей кӳрет.
Ҫĕнĕ ҫул татах
Пултăр аванрах,
Ырлăхпа ҫеҫ савăк чун-чĕре.

### Савнă мăшăрăма

Эс кăмăлпа паян ҫӳретĕн,
Сăну сан ҫутă ҫавăнпа.
Ҫак ырлăхпа телей кӳретĕн,
Пăхатăн ăшшăн савăнса.

Вуншар ҫул пĕрлĕх
тĕреклĕнчĕ,
Чĕре шăранчĕ ҫулăмра.
Ҫил-тăман пек асаплă терчĕ
Хупларĕ-ҫке утас ҫула.

Ҫутатрĕ юрату хăвачĕ!
Ҫĕклерĕ малалла утма.
Хура пĕлĕтсене хăварчĕ,
Вăй пачĕ ҫирĕпрех пулма.

Туй кунĕн пиллĕхлĕ сăвапĕ
Ҫулсем иртсен вăйпа ҫитет.
Чăн юратун сӳнми хăвачĕ
Ҫут тĕнчене ҫăлса илет.

### Маргарита ПРОКОПЬЕВА

### Аса ан илтер

Аса ан илтер ҫав хавхаллă
куна,
Эп хам та ăна манаймастăп.
Каллех вут чĕртсе ан хускат
ман чуна,
Хамра айăпа тупаймастăп.

Ан пăх эс каллех кăвар
пек куҫсемпе,
Чĕре сивĕнсен хĕмленеймĕ.
Текех киленеймĕн ҫурхи
каҫсемпе,
Юнланнă суран сипленеймĕ.

Пĕрле чух вăй илнĕ
ҫап-ҫут ĕмĕтсем
Пире тек хавхалантараймĕҫ.
Турат хуҫăлсан ҫĕнĕрен
вăй илмест,
Яш вăхăт текех таврăнаймĕ.
Чунра ялкăшса ҫунакан
ҫулăма,
Шанаттăм – никам
сӳнтереймĕ.
Пĕччен чухне сӳннĕ
имшер туйăма
Эс урăх нихсан та чĕртеймĕн.

### Сана ҫеҫ кĕтеттĕм

Асăмран тухмарăн.
Куҫăмран пăхмарăн
Иккĕн ларнă хурăн ҫумĕнче.
Пăлханса кĕтеттĕм,
Вăтанса чĕнеттĕм,
Ĕмĕт путрĕ тинĕс хумĕнче.

Чечексем сĕнмерĕн,
Ăш сăмах чĕнмерĕн.
Уйăха хупларĕҫ пĕлĕтсем.
Эс таҫта васкаттăн,
Такама шыраттăн.
Ҫеҫкине тăкатчĕҫ ҫĕмĕртсем.

Сана ҫеҫ сăнаттăм –
Ют хĕре лăпкаттăн.
Сивĕ пăр пек шăнчĕҫ
туйăмсем.
Сансăрах вăй тупăп,
Ҫаран тăрăх чупăп.
Сая кайрĕҫ ҫамрăк вăхăтсем.

Чĕре сивлеймерĕ,
Темшĕн писеймерĕ,
Юлаймарăм ҫулăн айккине.
Эп сана ĕненнĕ,
Иккĕн ларас тенĕ,
Темшĕн ансăр тунă саккине.

Вăрмар поселокĕ.





# Джованна Антонелли: «Юрату чуралăхĕ – ман валли мар»

**Хăй вăхăтĕнче миллионшар çынна /çак фильма 30 çĕршывра кăтартнă/ сенкер экран çумне çыхса лартнă “Клон” сериал каялла таврăнчĕ. Пĕрре курнă пулин те халĕ те сюжечĕпе, хитре актерсемпе, вĕсен вăййипе тыкăнлать вăл. Çавăнпах тĕп рольсенчен пĕрне калăпланă Джованна Антонелли актриса патне эпир те тепĕр хут таврăнар терĕмĕр.**

## Ашшĕ çулĕпе

Бразили актриси мăсăльман тĕнчин чиперукĕн сăнарĕпе ĕмĕрлĕхех çыхăннă темелле – хăйĕн ятне мар, Жади тесен ытларах пĕлеççĕ-тĕр ăна.

Ашшĕ музыка театрĕн актерĕ Хилтон Прадо, амăшĕ – Суэйли Антонелли балерина. Хĕрача “Глобо” студирех çитĕннĕ темелле. Суэйли студи балетĕнче ташланă май пепкине вĕçĕмех пĕрле илсе çӳренĕ. Джованна малтанах амăшĕ пекех балерина пулма ĕмĕтленнĕ. Каярахпа ашшĕн çулне суйланă. Хĕрача 11 çултах телекуравра пĕчĕк роле тивĕçнĕ! Çакăн хыççăн, ашшĕ-амăшĕ хирĕçленине пăхмасăрах, кашни кун тенĕ пек тĕрлĕ çĕре хăйне рольсенче тĕрĕслесе пăхмашкăн чупнă. Виçĕ çултан “Глобо” ăна ача-пăча кăларăмне ертсе пынă çĕре хутшăнма ыйтнă. Ашшĕ-амăшĕ условипе кăна килĕшнĕ – шкул хыççăн хĕр çапах та журналистика факультетне вĕренме кĕрет. Анчах та хĕр икĕ семестр аран-аран чăтса ирттернĕ, каярахпа пуçĕпех актер профессине путнă. Тăрăшни сая кайман. Вунулттăра Джованна “Тропиканка” фильмра пысăках мар роле тивĕçнĕ. Унтан сериалсене хутшăннă. Ĕнтĕ хĕр пурнăçне кинопа кăна çыхăнтарма пултарнине ăнланнă, çавăнпа тăрăшсах ĕçленĕ. Çамрăк актрисăна ăнăçупа чапран ытларах шăпах ӳкерӳ саманчĕ хăй тыткăнланă.

## Джованна-Жади

Антонелли кинори чи пĕлтерĕшлĕ пĕрремĕш ĕçĕ – “Семейные узы” фильмри Капита сăнарĕ. Тинех продюсерсем ăмăртса тенĕ пек рольсем сĕнме пуçланă. 2001 çулта Джованна Бразили паллă режиссерĕн “Победительницы” фильмĕнче ӳкерĕннĕ. Ĕç питĕ ăнăçлă пулса тухнă. Çамрăк актерсем Майамире иртнĕ фестивальте наградăна тивĕçнĕ. Шăпах çакăн хыççăн Бразилире ӳснĕ Жади рольне калăплама тивнĕ унăн. “Клон” теленовеллăна Глория Перес сценарийĕ тăрăх ӳкернĕ. Джованна тĕнче çинчен мансах сăнара калăплама хатĕрленнĕ – араб историйĕпе культурине шĕкĕлченĕ, Коран тĕлĕшпе вулакан лекцисене çӳренĕ, документлă фильмсем пăхнă, кĕнеке вуланă, ют чĕлхепе калаçма хăнăхнă тата... хырăм ташшин хусканăвĕсене кашни кун 8 сехет вĕреннĕ. Икĕ уйăхранах актриса мăсăльман хĕрĕсенчен пĕрре те кая мар ташланă. Савăннипе ташă костюмне хывмасăрах çакна мăшăрне Рикардона пĕлтерме васканă Джованна. Тухăç хĕрарăмĕсенчен ытти енĕпе те уйрăлса тăрас мар тесе çырă çӳçне хуратнă, ӳтне искусствăллă майпа хĕртĕнсе хăмăрлатнă. Жадие юратни куракана тухăç тĕнчипе çывăхлатнă.

## Кинори пек...

Каярахпа карьера пусмипе çӳлелле кармашнинчен тĕлĕнме кирлех мар-тăр. “Дом семи женщин” сериалра Джузеппе Гарибальди арăмне чаплă вылянă актриса. “Цвет греха” фильмри сăнара чăн пурнăçпа çывăхрах калăплас тесе имиджне тĕпрен улăштарнă.

Чăн та, сериалсенчи хĕрӳ туйăмсенчен пурнăçрисем те пĕрре те кая юлмаççĕ. Джованна пĕрремĕш хут çамрăклах качча тухнă /халĕ вăл çакăн пирки “пысăк шӳт” тет/. Рикардо Медина предпринимательпе пурăннă вăхăт карьера ӳсĕмĕпе пĕр килнĕ. Кинори юрату чăн пурнăçа куçнă та тăвтă çул тытăнса тăнă çемьене аркатса пăрахнă. Джованна – упăшкинчен, Мурилу Бенисио-Лукас савнийĕнчен уйрăлнă. Тинех вĕсем хутшăнăвĕсене çын куçĕнчен пытарма пăрахнă. Икĕ çул сисĕнмесĕрех иртнĕ. Унтан тăруках çак мăшăр уйрăлни пирки сăмах сарăлнă – нумаях пулмасть кăна иккĕшĕ Джованна çуралнă кунĕнче хĕрӳллĕн чуптунă пулин те... Лукас чун суранĕсене сиплеме Парижа тухса кайнă. Жади урăххине тупни пирки сăмах сарăлнă. Анчах та мăшăр “Двое на качелях” спектакльте пĕрле вылянă, çитменнине – пĕр-пĕрне юратакан савнисене. Уйрăлаканскерсем çак ĕçре юлашки хут выляссине пĕлтерсе сцена çине тухнă. ...Спектакль вĕçленсе пынă. Никам кĕтмен çĕртен сценарирен пăрăнса Джованна макăрса янă, Мурилу ăна ыталаса илнĕ. Çакăн хыççăн мăшăр пĕрлех юлнă. Телейлĕ хĕрарăм 2005 çулта ача çуратнă. Унăн пепкин ашшĕ рольне Мурилуран лайăхрах никам та выляймассине каланă вăл. Çапла пулса тухнă та. Джованна Рио-де-Жанейрора çуратнă. Арçын ачана Пьетру ят хунă. Чăн та, Пьетру Бенисио ашшĕ-амăшĕн юрату кӳллинче пит нумаях чăпăл тăвайман. 2007 çулта уйрăлса кайнă арçынпа хĕрарăм. Çапах та халĕ ывăлĕшĕн те пулин хутшăнусене тытса тăма тăрăшаççĕ.



● “КЛОН”.



● ЫВĂЛĔПЕ.



● ХĔРĔСЕМПЕ.



● МĂШĂРĔПЕ.

## Арçынсен вăчăри

Актриса, профессине тӳрре кăларнă пекех, темиçе арçынпа та çемье çавăрма хăтланса пăхнă. Официаллă майпа вăл икĕ хутчен качча тухнă: пĕрремĕш упăшкипе Рикардо Мединапа шкулта пĕрле вĕреннĕ, иккĕмĕшĕ, Роберто Локасио, Кăнтăр Америка бизнесменĕ. Пĕрремĕшпе тăватă çул пĕрле пурăннă, иккĕмĕш çемье тăватă уйăхранах арканнă. Мурилу Бенисиопа /виçĕ çул тытăнса тăнă/ тата Артур Фернандеспа /питĕ кĕске вăхăт пĕрле пулнă/ хут уйăрттармасăрах пурăннă. 2010 çулта Леонардо Ногейроран йĕкĕреш çуратнă. Халĕ хăйĕн хĕрĕсен ашшĕпе пĕрле пурăнать. Джованна 40-е çывхарса пырать. Тăван çĕршывĕнче вăл халĕ те – чаплă актриса.

## Мĕн каласа кăтартать-ха актриса хăй çинчен?

● Паян эпĕ тулли телей валли уçă. Чунри лăпкăлăха аркатма никама та, ниме те ирĕк памастăп. Ĕçре те, пурнăçăмра та йĕрке кĕртме тăрăшатăп. 28-та ăс кĕчĕ темелле. Çук, пурнăçăмри кризиспа мар, ывăлăмпа çыхăннă ку. Çулталăка яхăн ун çумĕнче тĕпĕртетрĕм. Çакăн пек пурнăçран пылакраххи нимĕн те çук. 30 çула çитнĕ тĕле манăн ывăл пулассине яланах каланă эпĕ. Унтан хĕр пирки ĕмĕтленнĕччĕ. Йăлтах пурнăçланчĕ.

Халĕ нумайăшĕ ашшĕ-амăшĕнчен уйрăм пурăнма тăрăшать. Çапах та чи пĕлтерĕшли – ача. Хамăрăн кăмăла хыçа хăварса пепкенне тивĕçтерме тăрăшмалла.

● Йăнăшсем пулман тесе каламăп. Анчах та малашне вĕсенчен сыхланасчĕ. Манăн пуçра компьютер кнопки пекки пур – “delete” текенни. Мĕн те пулин кăсăклантарма пăрахсан ăна пуçĕпех, 100 процентчĕпех, манăçа кăларатăп. Япаласене те, ларутăрăва та, çынсене те. Çакă – манăн çемье тата юлташсен асăрхаттарăвĕн çимĕçĕ.

● Юрату – вĕри туйăм. Анчах ун çинчен калаçма кам эпĕ? Юрату шăпана алтарь çине хума мар, пĕр чĕлхе тупса пĕр-пĕрне ăнланма хистет. Хам çинчен манса юратнă çынна юрамалла тăрăшмалла-и? Çук, ман валли мар ку. Эпĕ пĕчченлĕхе суйласа илĕп. Айванлăх йăлтах иртнĕлĕхре, çамрăклăхра юлнă. Паян эпĕ – сывă юратушăн.

● Романтикăсăр туйăмсем те сĕвĕрĕлеççĕ. Çурта çутипе апатланма, çуртăма илемлетме кăмăллатăп, пĕрре курсах юратса пăрахма пулнине ĕненетĕп.

● “Клон” теленовелла – харăсах темиçе шăпапа паллаштаракан кăткăс ĕç. Сăнарсем тĕрлĕ культурăра аталаннă, вĕсем çапăнса хĕм кăлараççĕ – Марокко климачĕ пекех. Марокко... Ку çĕршыв ман умра çĕнĕ тĕнче алăкне уçрĕ: тавралăх, тумтир, стена çинчи мозаикăсем, кухня... Араб юмахĕнче пулнăнах туйăнчĕ!

● Мароккăра арçынпа хĕрарăм тĕнчи пачах уйрăм аталанать. Хĕрарăмсем урама пуç тӳпеки таран чăптанса тухаççĕ, анчах та сăрланмасăр килте те çӳремеççĕ. Ку культурăпа килĕшӳллĕн вĕсен упăшки валли кăна хитреленмелле. Эпĕ ун пек пурăнаймăттăм. Эпĕ пăртак феминистка, арçын куçĕнчен кăна пăхса лараймастăп. Йăлтах хам татса пама хăнăхнă.

● Хам сăнарпа пачах та пĕр килместĕп. Хăш-пĕр çын хăйне телейсĕр туйма яланах мĕнле те пулин сăлтав шырать. Тупсан вара – пурнăç ăннă. Жади – шăпах çак йышран. Вăл пĕр арçынран çакланнă та ним тусан та ăна вĕçертесшĕн мар.

● Эпĕ пуçĕпех ĕçе парăннă, кашни самант ĕçпе тулнă. Юрату пирки апла калаймăп, камшăн та пулин пуçа çухатса хам, атте-анне, пурнăç пирки манаймăп.

● Юрату-и? Ун пирки нумай каларăм. Çапах та кунта кам та пулин сăмсине чикнине чăтма пултараймастăп. Манăн пурнăç вăл – манăн кăна, çын куçĕхăлхи валли мар.

● Паянхи ăнăçу ахаль килмен, уншăн эпĕ питĕ нумай тăрăшнă. Чап хăй тĕллĕн килмен. Парне мар ку, уншăн эпĕ лăш курмасăр тар тăкнă.

● Манăн пурнăçра тĕп вырăнта – çемье. Эпĕ юратура ӳснĕ, халĕ те тăвансемпе çирĕп çыхăну тытатпăр. Атте-аннерен, чăн та, уйрăм пурăнатпăр, анчах та вĕсем яланах пĕрле.

**Мурилу Бенисио 1972 çулхи утă уйăхĕн 13-мĕшĕнче Рио-де-Жанейрора нумай ачаллă çемьере çуралнă. Амăшĕ шкулта ĕçленĕ. 18 тултарсан Сан-Францискона вĕренме тухса кайнă. Америкăра 3 çул сцена ăсталăхне туптанă. 21 тултарсан вăхăтлăха тăван кĕтесне таврăнать. Анчах та юлташĕ “Глобо” студийĕнче роль сĕнет. 1993 çулта актер карьерине пуçлать, кинора ӳкерĕнет, театрти спектакльсене хутшăнать. 1996 çулта Алессандра Негрини актрисăпа çемье çавăрать. Ывăл Антониу çуралать. 1997 çулта хутшăнусем арканаççĕ, актер “Во имя любви” сериалра унăн сăнарĕн аппăшне калăплакан Каролина Ферразпа юрату çавăрттарать. 1998 çулта Мурилу Каролинăпа /вăл та упăшкинчен уйрăлать, хĕрачине мăшăрĕпе хăварать/ официаллă майпах пĕрле пурăнма пуçлать. Бенисио-Ферраз Бразилири чи илемлĕ мăшăр пулса тăрать. Анчах та вĕсен хушшинче пĕр вĕçĕм шавлă хирĕçӳ çуралать. Хĕрарăмсене пĕрин хыççăн теприне улăштарнă вăхăтрах Мурилу продюсер, режиссер пултарулăхĕсене те туптать.**



## АЧАСЕМ КАЛАÇÂÇĔ

*Мĕн вăл – туй?*

●“Хĕрача патне кĕретĕн те ăна урама выляма илсе тухатăн. Çакăн хыççăн ашшĕ-амăшне текех тавăрса памастăн”. /Яша, 6 çулта/.

●“Пĕр-пĕрне юратакансем пĕр вĕçĕм чуптăваççĕ. Каярахпа вĕсене çакă йăлăхтарса çитерет. Мĕн тумалла ĕнтĕ халĕ? Вара вĕсем пĕрлешме шухăшлаççĕ”. /Даша, 8 çулта/.

*Мăшăра мĕнле суйламалла?*

●“Хĕрĕн те эсĕ кăмăллакан пулăмсенех килĕштермелле. Калăпăр, эсĕ футбол юрататăн. Арăм вара çав вăхăтра килти тирпейлĕхшĕн тăрăштăр. Унсăр пуçне чипсы санăн аллу айĕнчех иккенне сăнасах тăтăр – пĕтсен çĕннине хурса патăр”. /Алик, 9 çулта/.

●“Анне эпĕ ӳссе çитсен ăслă-тăнлă, ырă чунлă каччăпа тĕл пулса çемье çавăрасса калать. Эпĕ вара çӳллĕ, кăвак куçлă каччăна суйласа илĕп ахăр...” /Милана, 7 çулта/.

*Миçе çулта çемье çавăрсан аванрах?*

●“75 – чи аван вăхăт. Ун чухне тивĕçлĕ канăва тухнă ĕнтĕ, ĕçе çӳремелле мар, нимĕн те тумалла мар – капла та пенси килет. Кунĕпе диван çинчен тăмасăр пĕр-пĕрне юратма пулать”. /Аня, 8 çулта/.

●“Вăт садикрен тухсанах хам валли арăм шырама пуçлатăп”. /Никита, 6 çулта/.

*Тĕлпулу кичем иртсен мĕн тумалла?*

●“Тепрехинче урăх арçын ачана чĕнмелле. Калăпăр, Антон пирĕн пата килсен манпа калаçмасăр роботсемпе кăна вылянă чухне те кичем мар унпа. Тен, ку шăпах юрату?.. Уй!” /Наташа, 6 çулта/.

●“Эпĕ унран тарса кравать айне кĕрсе выртăп. Хам çав вăхăтра телекурава шăнкăравлăп – эпĕ вилнĕ тесе пĕлтерччĕр...” /Гордей, 9 çулта/.

*Хăçан чуптумашкăн пуçлама юрать?*

●“Çĕрĕ туянмашкăн укçа пуçтарса çитермесĕр чуптума юрамасть. Манăн тепĕр 20 тенкĕ çитмест-ха...” /Арсений, 7 çулта/.

●“Чи кирли – çын курнă чух чуптума юрамасть, унсăрăн мультиксем пĕтмесĕр те кĕтесрен тухаймăн. Çапах та никам та курман чухне эпĕ хитре арçын ачапа чуптăвăттăм. Нумай мар – пĕр темиçе сехет...” /Настя, 6 çулта/.

*Атте-анне мĕнле паллашнă?*

●“Вĕсем яланах пĕрле пулнă. Каярахпа пĕр-пĕрне музейра асăрханă”. /Богдан, 6 çулта/.

●“Институтра вĕреннĕ чухне атте аннерен уроксем тумашкăн пулăшу ыйтнă. Тĕрĕссипе, вăл ухмаха кăна пенине, чăнласа вара питĕ ăслă пулнине анне каярахпа кăна ăнланса илнĕ”. /Женя, 7 çулта/.

*Çемье телейĕ мĕнрен килет?*

●“Вăл хитре пулнине арăма яланах каламалла – ирхине вăрансан вăл пин-пин пыл хурчĕ сăхса пĕтернĕ пек курăнать пулин те...” /Миша, 8 çулта/.

●“Манăн анне яланах аттене апат парать, хăй вара унăн турилккинчен пачах та çимест”. /Таня, 6 çулта/.

*Пĕччен лайăхрах-и е мăшăрпа-и?*

●“Хĕрачасен пĕччен пулсан лайăхрах, арçын ачасене – мăшăрпа: вĕсен хыççăн ялан камăн та пулин тирпейлемелле вĕт...” /Ирина, 6 çулта/.

●“Манăн пуç та ыратса кайрĕ... Эпĕ ача кăна вĕт-ха. Мана хальлĕхе кун çинчен шухăшлама иртерех”. /Илья, 9 çулта/.

### ☺И-ХИ-ХИК☺

* * *

Аттепе аннерен шăллăм туянса пама ыйтрăм. Хирĕçлерĕç – хаксем ӳссе кайнă-мĕн. Куçăн улталаççĕ. Кушак туянма укçа тупнă вĕт-ха...

* * *

Ĕнер çутта сӳнтерчĕç... Икĕ сехетлĕх... Икĕ сехет Интернет уçлăхне тухаймарăм. Ирĕксĕрех çемьепе хутшăнма лекрĕ. Интереслĕ çынсем иккен...

* * *

Манăн тантăш – чăн-чăн юлташ. Ĕнер иксĕмĕр кафере аванах ларнă. Вăт вăл мана киле сĕтĕрсе çитернĕ, пиллĕккĕмĕш хута хăпартнă та упăшкана парса хăварнă. Пурте лайăх – эпĕ пĕрремĕш хутра пурăннине тата упăшкаран виçĕ çул каяллах уйрăлнине шута илмесен...

* * *

Ача садĕнче куршак çинче ларнă май пуçра яланах пĕр шухăш мĕлтлететчĕ – хăçан ӳсĕп-ши, çакăнтан тухса кайса шкула çӳреме тытăнăп-ши? Акă ĕмĕтĕм тулчĕ – пĕрремĕш вĕрентекен, пĕрремĕш урок. Пы-ысăк портфеле сĕтĕрсе ывăнтăм ĕнтĕ, хăçан янăрать-ши юлашки шăнкăрав? Института вĕренме кĕрейĕп-ши? Пулчĕ: эпĕ – студентка! Ах, кунта пурнăç вĕресе кăна тăрать! Анчах та... укçасăр пурнăç йăлăхтарчĕ. Ĕçе, хăвăртрах ĕçе вырнаçмалла. Тинех! Эпĕ ĕçлетĕп! Эй, турăçăм! Ман хваттерте пуш-пушах... Юсав ĕçĕсем ирттермелле, сĕтел-пукан туянмалла... Çук, качча тухсан аванрах! Туй мĕнле чаплă иртрĕ! Эпĕ телейлĕ!!! Мĕн ку? Мĕн кĕмсĕртетет? Хваттер алăкне хăра-хăра уçатăп. Пĕтрĕмĕр, ывăл люстра ӳкернĕ. Юратьха хăй аманман. Хĕрача кушака хăваласа чупать. Упăшка, яланхи пекех, сăра тытнă – телевизор умĕнче диван хураллать... Пӳлĕмре... Мамай çарĕ иртсе кайнă тейĕн... Чуна халĕ пĕртен-пĕр шухăш шĕкĕ пек кăшлать – çавăн чухне, пиллĕкре, ларасчĕ садикре шăппăн-лăпкăн кăна куршак çинче!!!

## РЕКЛАМА ТАТА ПĔЛТЕРӲСЕМ

*КАЗАКОВА, ХРАМОВА, УТКИНА 70 çулпа ВАÇУКСЕМ саламлаççĕ.*

АУ "Издательский дом "Хыпар"
**СДАЕТ ПОМЕЩЕНИЯ ПОД ОФИС**
на 7 этаже Дома печати
Справки по телефонам:
28-83-70, 56-04-17.

АУ "Издательский дом "Хыпар"
**требуется МЕНЕДЖЕР ПО РЕКЛАМЕ**
*Зарплата высокая + %*
Справки по телефонам:
56-00-67, 56-04-17.

### ТУЯНАТĂП КУПЛЮ

**18.Бычков, тёлок, коров, лошадей.** Т. 8-962-599-47-06.

**19.ДОМ с участком** в любом состоянии. Т. 8-960-300-87-87.

**65.КРС** – коров, бычков; **лошадей, тёлок.** Т. 8-903-389-85-72.

**66. КРС – коров, бычков;** лошадей, тёлок. Т. 8-961-345-05-28.

**141.Коров, бычков и лошадей.** Т. 8-960-310-98-78.

**333.Бычков, тёлок, коров, свиноматок.** Т. 8-937-014-49-97.

### ПУЛĂШУ УСЛУГИ

**25.Чăнкă тамада.** Т. 8-937-393-57-79.

**38.Чистка колодцев.** Т. 89613429059.

**45.Лечение алкоголизма, табакокурения.** Т.: 8-903-066-29-02, 89276673368. *Лиц. 5001001230 от 08.06.2007. Имеются противопоказания, проконсультируйтесь со специалистом.*

**51.Бурение колодцев,** скважин, кольца колодезные высококачественные. Доставка. Тел.: 8-927-847-71-43, 8-937-379-00-80.

**152.Бурение скважин** на воду. Т. 8-960-302-12-93.

### ĔÇ РАБОТА

**110.Монолитчики,** плотники, **монтажники,** шлифовщики, **каменщики,** сварщики. Питание, спецодежда. Вахта. Т. 8-925-002-22-38.

### СУТАТĂП ПРОДАЮ

**2.Акция! Блоки керамзитобетонные** 20х20х40 – 33 руб., 12х20х40 – 29 руб., 10х20х40 – 25 руб. Высокое кач-во. Доставка. Т. 8-967-470-46-77.

**3.Акция! Кольца колодезные** диам. – 0,7 м., 1 м., 1,5 м. Д-ка манипулятором. Бурение. Т. 8-967-470-46-77.

**4.Немецкие ПЛАСТИКОВЫЕ ОКНА.** Низкие цены. Пенсионерам скидки. Замер. Доставка – бесплатно. Без вых. **Т. 8-987-576-65-62.**

**5.Блоки керамзитобетонные** 20х20х40, 12х20х40, 9х20х40 пропаренные, гидро-вибропрессованные заводские от производителя – недорого, **цемент, песок.** Доставка. Разгрузка. Без выходных. Кассовый чек, документы. Т. 8-960-301-63-74.

**7.Срубы для бани.** Т. 37-28-74.

**8.Гравмассу,** песок, **щебень,** торф, кирпичный бой, **керамблок, керамзит.** Пенсионерам, уч. ВОВ – скидки. Т. 8-905-199-01-22.

**10.Сетку-рабицу** от производителя – более 80 видов, сетку сварную – более 30 видов, **профнастил,** гвозди, **столбы,** проволоку. Изготовление ворот, калиток. Доставка. Выездная сварка /генератор/. Грузоперевозки. Т.: 68-05-67, 34-70-70.

**15.Кирпич, кольца.** Т. 89613393363.

**17.Песок, гравмассу, керамзит,** чернозём, навоз. Доставка. Т. 8-905-197-40-19.

**20.Кирпич, к/блок.** Т. 89276678378.

**21.Керамблоки, гравмассу, песок.** Т.: 89033456307, 89176757528.

**23.Гравмассу, песок,** бой кирпича, **щебень.** Д-ка. Т. 89061355241.

**24.ГРАБЛИ,** косилки, **сажалки,** копалки, **окучники, опрыскиватели.** Доставка. Т. 89278533596.

**26.КЕРАМБЛОКИ** /20х20х40, 12х20х40, 10х20х40/, **керамзит** в мешках, **цемент,** кирпич, **к/кольца.** Доставка. Т. 8-903-346-85-56.

**30.Гравмассу, песок, щебень, керамзит.** Д-ка. Т. 89053465671.

**31.Песок, гравмассу,** бой кирпича, **щебень. Д-ка.** Т. 89033225766.

**53.ОТРУБИ, зерно, к/корм,** сахар, **муку.** Доставка. Т. 89373916016.

**58.Гравмассу, щебень, песок, керамзит,** бетон, чернозем. Д-ка. Недорого. Т. 89276687015.

**59.ТЕПЛИЦЫ от производителя.** Доставка. Тел. 48-16-54.

**74.Керамблоки вибропрессованные, пропаренные.** Все размеры. Доставка. Т. 8-917-677-68-46.

## КĂСĂКЛĂ

### Финик

Финик пирĕн сывлăхшăн çав тери усăллă. Çак çимĕçе çиекенсен шăлĕсем те çирĕп. Финикре кӳкĕрт йӳçекĕ те çук. Унпа апатра пĕрмай усă куракансен кăмăлĕ те яланах хăпартлануллă. Çавăн пекех финик организма шлаксенчен тасатма, иммунитета çирĕплетме, ăс-тăна çивĕчлетме пулăшать. Типĕтнĕ çак çырлара диетологсем окситоцин пуррине асăрханă. Вăл ача ĕмĕртекенсене кăкăра сĕтпе тултарма пулăшать.

### Какай тиркесен

Апатлануран какая пачах кăларсан, пахчаçимĕçпе çеç пурăнсан, çав вăхăтрах йывăр ĕçлесен, спортзала тăтăш çӳресен пĕрер уйăхранах сывлăх хавшама пуçлать. Пуç çаврăнма, çӳç тăкăнма, кăкăр хĕсме тытăнать. Юнра тимĕр çитменнипе çыхăннă ку: гемоглобина виçере тытма шăпах какай пулăшать.

**Иртнĕ номерте пичетленнĕ сăмах каçмăш хуравĕсем:**

***1. Кăвакал. 2. Лупашка. 3. Акăлчан. 4. Нарцисс. 5. Самолет. 6.Ташкент. 7. Тараса. 8. Арканзас. 9. Саламат. 10. «Тăвалла». 11. Асамат. 12. Терентьев. 13. Воронков. 14. Владимир. 15. Репортер. 16. Ракетчик. 17. «Капитал». 18. Лебедка. 19. Антонов. 20. Валашка. 21.Аппарат. 22. «Торпедо». 23. Озеров.***

« ХЫПАР »
Издательство çурчĕ" автономи учрежденийĕ

УЧРЕДИТЕЛЬСЕМ: ЧĂВАШ РЕСПУБЛИКИН ИНФОРМАЦИ ПОЛИТИКИН ТАТА МАССĂЛЛĂ КОММУНИКАЦИСЕН МИНИСТЕРСТВИ, ЧĂВАШ РЕСПУБЛИКИН ИНФОРМАЦИ ПОЛИТИКИН ТАТА МАССĂЛЛĂ КОММУНИКАЦИСЕН МИНИСТЕРСТВИН “ХЫПАР” ИЗДАТЕЛЬСТВО ÇУРЧĔ” ЧĂВАШ РЕСПУБЛИКИН АВТОНОМИ УЧРЕЖДЕНИЙĔ

Директор – тĕп редактор В.В.ТУРКАЙ

ЧĂВАШ ХĔРАРĂМĔ

Çырăнмалли индекс: 11515

Редактор – М.М.ИЛЬИНА

Дежурнăй редактор – Е.М.АТАМАНОВА

Хаçата Федерацин çыхăну, информаци технологийĕсен тата массăллă коммуникацисен тытăмĕнчи тĕрĕслев службин 2013 çулхи апрель уйăхĕн 30-мĕшĕнче ПИ № ФС77-54016 номерпе регистрациленĕ.

РЕДАКЦИПЕ ИЗДАТЕЛЬ АДРЕСĔ: 428019, Шупашкар хули, Иван Яковлев проспекчĕ, 13, Пичет çурчĕ
ЫЙТСА ПĔЛМЕЛЛИ ТЕЛЕФОНСЕМ: 55-07-21, 56-00-67, 56-03-54, 28-83-67, 28-85-33.
Факс: /8352/ 28-83-70, 56-20-07
Электрон почти: hypar@mail.ru

Хаçатри рекламăсăр тӳлевлĕ информаци материалĕсем “Реклама çинчен” Федераци саккунĕн 2 ст. килĕшӳллĕн **“Аталану çулĕпе”, “Ят-сум”, “Ĕç тата çын”, «Самана таппи»** рубрикăсенче пичетленеççĕ.
Пичете графикпа 19 сехет те 30 минутра алă пусмалла, 19 сехетре алă пуснă.
Хаçата «Хыпар» Издательство çурчĕ» АУ техника центрĕнче калăпланă, «Чăваш Ен» ИПК» АУО типографийĕнче пичетленĕ.
428019, Шупашкар хули, И.Яковлев проспекчĕ, 13.
56-00-23 – издательство директорĕ.
Тираж 8216. Заказ 292.